ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Февраль 20 юнкун
№ 37 (8689)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Çуракине хатĕрленнине тĕрĕслемелли рейд. А. Андреев, С. Аслан, П. Щипцов.—Удобрени хатĕрлесси юлса пырать (1 стр.).
Пуçламăш парторганизацисен ĕç опытĕнчен. Колхоза организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетессишĕн кĕрешни (2 стр.).
Районти хаçатсем çĕкленĕ пысăк ыйтусем (2 стр.).
П. Васильев.—Социальнăй обеспечени органĕсен ĕçне вăйлатмалла (2 стр.).
Пропагандистсене пулăшма. Г. Мартынов.—Республика ялхуçалăхĕн çĕнĕ ÿсĕмĕсемшĕн (3 стр.).
Вăрман хатĕрлемелли плана тултармалли стахановла уйăхлăх (3 стр.).
Механизаторсем вĕрентсе хатĕрлеççĕ. (3 стр.).
В. Ястребов.—Патрекел клубĕнче (3 стр.).
Халăх демократи çĕршывĕсенче (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Тунисри ĕçсем (4 стр.).
США васкасах вăрçа хатĕрленнине хирĕç (4 стр.).

Информациллĕ пĕлтерÿ

Февралĕн 18—19-мĕшĕсенче ВКП(б) Чăваш обкомĕн черетлĕ, IX-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум çак ыйтусене сÿтсе яврĕ:

1. Колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен ĕçĕсене лайăхлатмалли майсем çинчен. (Докладчик—ВКП(б) обкомĕн секретарĕ **Н. А. Шмаков** юлташ).

2. Республикăра капитальнăй строительство ĕçĕсен планне тултарасси мĕнле пыни çинчен. (Докладчик—ВКП(б) обкомĕн секретарĕ **Н. Н. Никитин** юлташ).

Сÿтсе явнă ыйтусем тăрăх пленум тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

ВКП(б) обком пленумĕ «Чăваш Коммуни» хаçатăн ответлă редакторĕ пулма **В. Я. Яковлев** юлташа çирĕплетрĕ, **М. К. Костин** юлташа вăл урăх ĕçе куçнă май, çак ĕçрен хăтарчĕ.

Колхозсемпе МТС-сенчи комсомол организацийĕсен рольне ÿстермелле

Социализмлă ялхуçалăхĕ ÿсĕм çулĕпе хăвăрт малалла кайса пырать. Иртнĕ çулта пирĕн Тăван çĕршыв 7 миллиард та 400 миллион пăт тĕштырă пухса кĕртрĕ. Техникăллă культурăсем акса тăвас тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те пысăк çитĕнÿсем тунă. Çак чаплă çĕнтерÿ пĕтĕм совет халăхне чунтан савăнтарать, социализмлă çĕрĕçенче çĕнĕ çитĕнÿсем тума вăй-хăват кÿрет.

Колхоз хресченĕсем умĕнче пысăк задачăсем тăнине партин Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви пирĕн республикăна панă заданисенчен те уççăн курма пулать. Çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче тĕштырă тухăçлăхне пирĕн республикăри колхозсенче кашни гектар пуçне 18 центнера çитермелле. Ытти культурăсен, уйрăмах техникăллă культурăсен тухăçлăхне те нумай ÿстермелле. Выльăх-чĕрлĕх йышне тата унăн тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе панă заданисем те пысăк. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви республика ялхуçалăхне тракторсем, комбайнсем, автомашинăсем, çĕнĕ йышши ытти машинăсем нумай парса пулăшрĕç.

Колхозсенчи тата МТС-сенчи комсомол организацийĕсен задачи—социализмлă ялхуçалăхĕн иртнĕ çулхи çитĕнĕвĕсем çинчен, Чăваш АССР ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе партипе правительство панă задачисем çинчен тата вĕсем пирĕн МТС-семпе колхозсене панă пулăшу çинчен çамрăксене тĕплĕ ăнлантарса парасси пулать. Халӗхи вăхăтри массăлла-политикăллă пĕтĕм ĕç колхоз çамрăкĕсен производствăллă тата политикăллă активлăхне, социализмлă ăмăртăвне ытларах та ытларах вăйлатма пулăшмалла.

ВКП(б) уставĕ кăтартса панă тăрăх, колхозăн е машина-трактор станцийĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тата колхоз правленийĕсемпе МТС дирекцийĕсене ĕçе лайăхлатма, социализмлă ăмăртăва организацилеме, хуçалăхпа политикăллă задачăсене ăнăçлă пурнăçлама пулăшас ĕçпе çыхăнса тăракан пур ыйтусене те сÿтсе явма тата çав ыйтусене парторганизацисем умне кăларса тăратма комсомол организацийĕсен хăйсен пуçарулăхне анлă кăтартма право пур. Çак правăпа тĕрĕс усă курни—колхозсенчи тата МТС-сенчи комсомол организацийĕсен рольне, вĕсен çамрăксем хушшинчи авторитетне тата организаторла пултарулăхне нумай ÿстерет.

Колхозлă ял çитес çуракине лайăх кĕтсе илме хатĕрленет. Халĕ кашни колхозра тата МТС-ра пысăк ĕçсем тумалла: машинăсене пурне те хăвăртрах юсамалла, вăрлăх тасатса хумалла, удобренисем хатĕрлемелле, уй-хир ĕçĕсене малтанхи кунтан пуçласа вĕçне çитиех йĕркеллĕ туса пыма ĕç планĕсем тумалла, çĕнĕ техникăпа тухăçлă ĕçлеме кадрсем хатĕрлемелле, тырпул тухăçлăхне ÿстерес ĕçре пухнă опыта сармалла. Шăпах çак ĕçсенче ĕнтĕ комсомол организацийĕсем хăйсен пуçарулăхĕпе пултарулăхне анлă палăртма тивĕç.

Пĕчĕк артельсене пĕрлештернĕ хыççăн, нумай колхозсенчи комсомол организацийĕсен йышĕ ÿсрĕ, вĕсем политикăпа организаци тĕлĕшĕнчен çирĕпленчĕç. Халĕ ĕнтĕ республикăри колхозсенче пуринче те комсомол организацийĕсем пур, 700 ытла колхозра ВЛКСМ комитечĕсем тунă. Чылай колхозсенчи организацисем тĕрĕс тăваççĕ. Шупашкар районĕнчи «Гвардеец» колхозри комсомол организацийĕ, сăмахран, пур бригадăсенче те комсомол групписем организациленĕ. Группăсем бригадирсене ĕçри çитменлĕхе пĕтерме пулăшаççĕ, çамрăксене политикăллă воспитани парас ĕçе тата вĕсен социализмлă ăмăртăвне йĕркелеççĕ, колхозниксене хаçат-журналсем вуласа параççĕ, политикăллă калаçусем ирттереççĕ, бригадăсенчи хĕрлĕ кĕтессен ĕçне активлă хутшăнаççĕ.

Колхозсенчи тата машина-трактор станцийĕсенчи комсомол организацийĕсене çирĕплетес тени вăл, пуринчен малтан, вĕсен колхоз производствинчи пĕлтерĕшне вăйлатас тенине пĕлтерет. Ĕçре пуçарулăхпа пултарулăха анлă палăртсан кăна колхоз çамрăкĕсем хушшинче комсомолецсен авторитечĕ ÿсме пултарать.

«Комсомолец тата комсомолка юлташсем!—тенĕ Сталин юлташ колхозник-ударниксен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш съездĕнче.—Вĕренĕр большевизма... Халлапа сахалтарах çаптарăр, ытларах ĕçлĕр,—вара сирĕн ĕçĕр чăнахах та тухĕ».

Ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан тĕп задачăна—тырпул тухăçлăхне пĕрмай ÿстерсе пырас, выльăх-чĕрлĕх йышне нумайлатнипе пĕр вăхăтрах унтан илекен тупăша пысăклатас задачăна ăнăçлăн пурнăçлас ĕçре колхозсемпе МТС-сенчи комсомол организацийĕсем пысăк ĕçсем туса ирттерме пултараççĕ, тума тивĕçлĕ те. Иртнĕ çулсенче республикăри нумай районсенче ялхуçалăх ĕçĕсене механизацилессине хакламан, ĕç вăйĕпе, колхозсен обществăллă куçалăхне вăйлатмалли шалти резервсемпе çителĕклĕ усă курман. Çав çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермелле. Колхозсенчи тата машина-трактор станцийĕсенчи комсомол организацийĕсем ку тĕлĕшпе парти организацийĕсене, çĕрĕç органĕсемпе колхоз правленийĕсене куллен пулăшмалла. Пуринчен малтан, колхозри çамрăксене машинăсене юратма, техникăпа лайăх ĕçлеме тата унпа тухăçлă усă курма вĕрентмелле, агрозоотехника курсĕсенче малта пыракан совет агрономипе зоотехники ăсăнлăхĕпе хĕçпăшаллантармалла.

МТС-сенчи малта пыракан трактористсемпе комбайнерсем механизаторсен социализмлă ăмăртăвне пуçарчĕç. Вырăнсенчен килекен хыпарсем çакна кăтартса параççĕ: социализмлă ăмăртăва механизаторсен анлă масси хутшăнать. Çамрăк механизаторсем машинăсемпе лайăх усă курма, тырпул тухăçлăхне ÿстерме пысăк обязательствăсем йышăнаççĕ. Вĕсене ăнăçлă пурнăçлас тесен, МТС-сенчи комсомол организацийĕсен халĕ уйрăмах машинăсене лайăх юсас, малта пыракансен опытне вĕренес, çамрăк механизаторсен квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе пикенсе ĕçлемелле. Машинăсене юсанă çĕрте комсомолецсен пурнинчен ытларах ...[illegible] кĕрешмелле. Чылай МТС-сенчи опыт кăтартса панă тăрăх, машинăсене юсассине тата ытти ĕçсене пакă тунине тĕрĕслеме çамрăксен постĕсене туни пысăк усă кÿрет. Çак опыта сарса, тракторсене вăхăтра тата пахалăх тĕлĕшĕнчен лайăх юсанине куллен тĕрĕслеме çамрăксене ытларах хутшăнтармалла.

Комсомол организацийĕсен вăйĕ—парти организацийĕсем куллен ертсе пынинче, тăтăшах пулăшса тăнинче. Хăшпĕр колхозниксемпе МТС-сенчи парторганизацисем çакна манаççĕ. Çавна пула вĕсенче çамрăк колхозниксемпе механизаторсене политикăллă воспитани парас ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Куславкка МТС-ĕнче, сăмахран, трактористсен культурăллă канăвне йĕркелемен, вĕсен политикăллă тата культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтерессине кирлĕ пек пăхмаççĕ. Комсомол организацийĕсен çамрăксене харпăр хăй ĕçне юратса тума, ĕç тухăçлăхне куллен ÿстерсе пыма хавхалантармалла.

Комсомол организацийĕсен уй-хир бригадисемпе трактор бригадисем хушшинчи ĕçлĕ туслăха çирĕплетес ыйту çине уйрăмах тимлĕ пăхас пулать. Кăçал ялхуçалăхĕнчи ĕçсем ăнăçлă пулассипи колхозри уй-хир бригадипе трактор бригади пĕр шухăшпа, пĕр ĕмĕтпе тачă çыхăнса ĕçленинчен нумай килет. Çакă вăл уй-хир ĕçĕсен пахалăхне лайăхлатмалли условисенчен пĕри.

Парти комитечĕсемпе пуçламăш парторганизацисен комсомол ĕçĕпе тăтăшах интересленмелле. Çамрăксене политикăллă воспитани парас, вĕсене техникăна, çĕрĕç наукине тĕплĕ вĕрентес тĕлĕшпе куллен тăрăшмалла. Колхоз çамрăкĕсем хушшинче тăтăшах пулса, парти работникĕсен вĕсене коммунистсен партийĕпе Совет правительствин политики çинчен, колхоз, район тата республика умĕнче тăракан задачăсем çинчен тăтăш ăнлантарса памалла. Колхозсемпе МТС-сенчи комсомол организацийĕсен рольне ÿстернипе колхоз çамрăкĕсене социализмлă ялхуçалăхĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тума мобилизацилемелле.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

СССР Верховнăй Совет сессийĕ ячĕпе

ТЕМИР-ТАУ. Казахстанри металлурги завочĕн мартен цехĕнче ĕçлекенсем СССР Верховнăй Совет сессийĕ уçăлнă куна производствăри пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илеççĕ. Февраль уйăхĕ пуçланнăранпа сталеварсем заданирен ирттерсе çĕршер тонна металл шăратса кăларнă.

Баримов, Голубев, Валеев, Ляпота сталеварсем мартен кăмаки нумайрах вăхăт ĕçлемелле тăвассишĕн, плантан ирттерсе питĕ лайăх продукци туса кăларассишĕн социализмлă ăмăрту сарса янă. Паян Баримов юлташ 6 сехет те 35 минут хушшинче хурçă шăратса кăларнă, график тăрăх унăн 7 сехет хушшинче шăратса кăлармалла пулнă. Стахановец февраль уйăхĕнче паянхипе вуннăмĕш хут ĕнтĕ хурçă хăвăрт шăратса кăларнă.

НОВГОРОД. Облаçри предприятисенче СССР Верховнăй Совет сессийĕ уçăлнă куна çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн социализмлă ăмăрту сарăлса пырать.

Кулотинăри Болдырева ячĕпе тăракан пир-авăр фабрикин коллективĕ стахановла вахтăна тăнă. Çип арлакан мастер Максименкова ертсе пыракан смена кашни кунах задание ирттерсе тултарать, пĕтĕмпех питтĕ лайăх продукци туса кăларать. Жарковăпа Скворцова мастерсем ертсе пыракан сменăсенчи пир-авăр тĕртекенсем те вахтăна тăнăранпа ĕç тухăçлăхне чылай ÿстерчĕ. Вĕсем кулленхи нормăна 5—10 процент ирттерсе тултараççĕ, питтĕ лайăх продукци туса кăлараççĕ.

ТАШКЕНТ. Ташкент чугун çулĕ çинче ĕçлекенсем СССР Верховнăй Совет сессийĕ уçăлнă куна ĕçри çитĕнÿсемпе кĕтсе илеççĕ.

Ташкентри тепловоссен деповĕнче ĕçлекенсен коллективĕ стахановла вахтăна тăнă. Тепловоз машинисчĕ Андрей Сотников февраль пуçланнăранпа 17 кун хушшинче йывăр таварлă 7 поезд ăсатнă, нормăран ирттерсе 3 500 тонна çĕр кăмрăкĕ турттарса кайнă. Бигмат Ирматов, Николай Колосов тата ытти машинистсем те йывăр таварлă поездсем темиçешер ăсатнă.

Февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС).

Кăнтăр енче уй-хир ĕçĕсем сарăлса пыраççĕ

ТАШКЕНТ. Сурхан-Дарья облаçĕнчи Денаусски тата Ширабадски районсенчи, Андижан облаçĕнчи Бусски районри тата Наманган облаçĕнчи çăртсем çывăхĕнчи районсенчи ялхуçалăх артелĕсем кĕрхи çĕртме тунă вырăнсене суха тытăннă.

Узбекистанăн сурçĕр енчи районĕсенче колхозсем люцерна акма пуçланă.

СИМФЕРОПОЛЬ. Хĕвел кĕртсе пăхнă май, çĕр хăвăрт типсе пырать. Крымри çĕр мамăкĕ акса тăвакан совхозсенче пур çĕрте те кĕрхи çĕртме тунă вырăнсене сÿрелеççĕ, культиваци тăваççĕ тата сурхурнехи пучахлă тырăсемпе силос тума хĕвелçаварăнăшĕ акаççĕ. «Большевик» тата «Первомайский» ятлă совхозсенче ялхуçалăх машини шилочĕсем кĕрхи çĕртме тунă вырăнсем çине минераллă удобренисен самолетсем çинчен сапаççĕ.

БАТУМИ. Аджарири колхозсем пĕлтĕрхинчен чылай малтан çуркуннехи уй-хир ĕçĕсене тума тытăннă. Кобулетски тата Батуми районĕсенче çурхи суха тăваççĕ.

Февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС).

Паха çăмлă сурăхсем ĕрчетекен совхозра

АЛМА-АТА. февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Павлодар облаçĕнче ăратлă сурăхсем ĕрчетекен Бескарагайски совхоз пур. Вăл синçе те вăрăм çăмлă ăратлă сурăхсем нумай ĕрчетет. Халĕ Казах ССР Совхозсен министерствинче çав совхоз ĕçĕсем çинчен кĕнеке çырса хатĕрленĕ.

Сурăхсен ăратлăхне лайăхлатса пынă май тата сурăхсене лайăх пăхнă çитерсе пăхса усранă май, вĕсем çăм ытларах паракан пулнă. Малтанхи вăхăтра кашни сурăхран 2,7 килограмм çăм касса илнĕ пулсан, иртнĕ çулта 4,2 килограмм çăм касса илнĕ. Çулталаса çитнĕ такасен вăтам виçи те 5 килограмм чухлĕ ÿснĕ. Иртнĕ çулта аслă чабан Бексеит Идрисов кашни сурăхран 5,73 килограмм çăм касса илнĕ. Хăшпĕр сурăхсен 11 килограмм таран çăм пани те пулнă.

Совхозра сурăхсене лайăх тĕл касараççĕ. Халĕ сурăхсен çăмне илме хатĕрленеççĕ. Сурăх çăмне касас ĕçе пĕтĕмпех механизацилеççĕ.

Виктор Гюго çуралнăранпа 150 çул тултарнине паллă тума хатĕрленеççĕ

МИНСК. Паян кунта, Белорус ССР-ĕнчи В. И. Ленин ячĕпе тăракан государство библиотекинче, Виктор Гюго çуралнăранпа 150 çул тултарнă ятпа литература выставки уçăлнă. Выставкăра французсен аслă писателĕн произведенийĕсене вырăсла, белорусла тата Совет Союзĕнчи ытти халăхсен чĕлхисемпе пичетлесе кăларнă кĕнекесем нумай.

В. Гюго ячĕпе литература выставкисем Горький ячĕпе тăракан библиотекăра, ачасен Островский ячĕпе тăракан библиотекинче, Белоруссири ...[illegible] районсенчи библиотекăсенче те уçăлаççĕ.

ВИЛЬНЮС. Литвăра пурăнакансем французсен аслă писателĕ Виктор Гюго çырнă произведенисене юратса вулаççĕ. Литва ССР-ĕнчи кĕнеке палати пĕлтернĕ тăрăх, В. Гюго çырнă «Отверженные» тата «Собор Парижской богоматери» ятлă романсене литовецсен чĕлхипе икĕ хут пичетлесе кăларнă. «Отверженные» ятлă романăн «Гаврош» тата «Козета» ятлă сыпăкĕсене уйрăм кĕнекесен туса пичетлесе кăларнă. В. Гюго çырнă ытти произведенисем те, сăмахран, «Человек, который смеется», «Последний день осужденного» тата ытти произведенисем пичетлесе тухнă.

В. Гюго çуралнăранпа 150 çул çитнĕ куна Литва ССР-ĕнчи илемлĕ литература издательстви «Отверженные» ятлă романа çĕнĕрен пичетлесе кăларнипе паллă тăвать.

Февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС).

Узбек ССР-ĕ Самарканд облаçĕнчи Нуратински районти колхозсем тулăпа урпа акаççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сталин ячĕпе тăракан колхозра çурхи тулă акаççĕ. Нуратински 1-мĕш МТС трактористчĕ Яманкул Шамурадовпа тырă акакан Акрам Рауфов кашни кун 18-шар гектар акаççĕ (норма тăрăх 12-шер гектар акмалла).

А. КУЗЬМЕНКО фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Паян колхоз председателĕсен республикăри канашлăвĕ уçăлать

Паян, февралĕн 20-мĕшĕнче, Шупашкарта колхоз председателĕсен республикăри канашлăвĕ уçăлать.

Канашлу 1951 çулта пирĕн республикăра ялхуçалăхне аталантарас, колхозсене организаципе хуçалăх енчен тĕреклетес тĕлĕшпе тунă ĕçсен итогне пăхса тухать.

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви, аслă сулпуçăмăр Сталин юлташ куллен-кун пулăшса тăнипе, пирĕн республикăри колхозсем ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăна пурнăçлас ĕçре—тырпул тухăçлăхне хăпартас, выльăх-чĕрлĕх йышне хăвăрт ÿстерсе пынипе пĕрлех унăн продуктивноçне çĕклес ĕçре пĕлтĕр паллă ÿсĕмсем турĕç. Пĕрлешсе пысăкланнă колхозсен экономики тĕрекленчĕ, вĕсенчен нумайăшĕ организаципе хуçалăх енчен çирĕпленчĕç, çĕнĕлле ĕçлесе пирвайхи опыт пухрĕç.

1952 çулта республикăри колхоз хресченĕсем умĕнче тăракан задачăсем тата пысăкрах, тата ответлăрах. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксене обществăллă хуçалăха хăвăртлăн çĕклеме—колхозсене малалла тĕреклетсе пымалли тата колхозниксен пурнăçне пĕрмай лайăхлатмалли никĕсе çирĕплетме чĕнет. Çитес ик-виçĕ çул хушшинче пирĕн кашни колхозрах тĕштырă тухăçлăхĕ гектар пуçне 18 центнертан кая мар пулмалла, кунпа пĕрлех кок-сагыз, йĕтĕн-долгунец, кантăр сÿсĕ, махорка, тымарçимĕç, нумай çул ÿсекен, пĕр çул ÿсекен курăксем, силос тумалли культурăсем чылай тухăçлăрах туса илмелле.

Канашлу пĕр ыйту—республика ялхуçалăхне малалла аталантармалли задачăсем çинчен сÿтсе явать.

Канашлура колхоз председателĕсемпе пĕрле ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсем, районсенчи ялхуçалăх пайĕсен заведующийĕсем пулаççĕ, çавăн пекех тăван республикăран—Мордва АССР-ĕнчи колхоз хресченĕсен делегацийĕ килнĕ.

Делегаци составĕнче: ВКП(б) Мордва обкомĕн иккĕмĕш секретарĕ **И. В. Осипов** юлташ (делегаци руководителĕ), Мордва АССР Ялхуçалăх министрĕн заместителĕ **Ф. Я. Малыгин** юлташ, ВЛКСМ обкомĕн секретарĕ **Н. М. Кулыгин** юлташ, «Новая жизнь» колхоз председателĕ, Социализмлă Ĕç Геройĕ **М. Я. Соломаткина** юлташ, трактор бригадин бригадирĕ, Социализмлă Ĕç Геройĕ **А. П. Узойкин** юлташ, кантăр акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен звеньевая, Социализмлă Ĕç Геройĕ **П. И. Рывкина** юлташ, доярка **К. Т. Максимова** юлташ, «Путь Ильича» колхозăн чабанĕ **Е. А. Нараев** юлташ, «Советская Мордовия» хаçатран—**А. П. Александров** юлташ.

Çуракине хатĕрленнине тĕрĕслемелли рейд

Удобрени хатĕрлесси юлса пырать

Канаш районĕнчи колхозсем иртнĕ çулта тырпул тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе хăшпĕр ÿсĕмсем турĕç пулсан та, хăйсем илнĕ обязательствăна пурнăçлаймарĕç. Çакă вăл, чи малтан, агротехника ĕçĕсен комплексне пĕтĕмĕшпе туса пырайманнинчен килнĕ. Сăмахран, тăпран сухаламалли сийне пур колхозсенче те тарăнлатнă, вăхăтра тата лайăх вăрлăх акса хăварнă. Анчах удобренисем хатĕрлесси çине çителĕксĕр пăхнă. Çавна пула тăпрана тарăнлатнă вăхăтра çĕре çĕнетме те, калчасене апат пама та удобрени çителĕклĕ пулман.

Кăçал колхозсен иртнĕ çулта пулнă çитменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе пĕтĕм вăйа хурса ĕçлемелле. Чăнах та, канашлусемпе пухусем пулсан удобрени хатĕрлесе уя кăларасси çинчен нумай шавлаççĕ. Çапах та ĕçлĕ пулăшу пулни сисĕнмест.

Ялхуçалăх министерстви панă план тăрăх, районти колхозсен кăçал уя 93 пин тонна ытла вырăнти, 185 тонна минераллă удобренисем кăлармалла. Вăхăт хăвăрт иртсе пырать. Анчах колхозсем çак пĕчĕк плана та тултарма тытăнманнипе пĕрех. Паянхи куна вырăнти удобрени 19 пин тонна кăна уя кăларнă. Колхозсен хирĕсенче пулса курсан, ку цифрăпа тĕрĕс тесе ĕненме çук. Ялхуçалăх пайне сведени тăратнă чух колхозсем висĕ лав тислĕке пĕр тонна тесе шутлаççĕ. Лав çине вара пиçĕн та 10—12 пăтран ытла тиемеççĕ.

Хăшпĕр колхозсем ку таранччен те вырăнти удобрени хатĕрлеме тытăнманха. Хрущев ячĕпе тăракан «Красное знамя» колхозсенче ку ĕçе хăçан тытăнасси те паллă мар. Молотов ячĕпе тăракан колхозăн витисен çумĕнче темĕн çÿлĕш тислĕк купаланса выртать. Мичурин ячĕпе тăракан колхозра та тем чухлĕ тислĕк сапаланса выртнине курма пулать. Çапах та вĕсем уя 1.839 тонна вырăнне 430 тонна кăна тислĕк кăларнă. Ку колхозра кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлес тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Вырăнти удобрение хире кăларма тытăннă колхозсенче те ĕç лайăх пырать теме çук. Çĕртме тунă чух салатма çăмăл пултăр тесе, тислĕке пĕрер лавăн, пĕчĕк купасем туса тăкаççĕ. Кун пек пĕчĕк купара выртакан тислĕк, паллах, çăва тухиччен çĕрсе ĕлкĕреймест, тырпула кирлĕ чи хаклă япаласем сая кайса пĕтеççĕ. Тислĕке пысăк купасем туса çилтен хупласа хурса çĕртме кирли çинчен манма юрамасть.

Шутласа пăхнă тăрăх, мĕнпур тислĕке кăларас пулсан та, вăл çĕртме тумалли вырăна çĕнетсе хăварма çитмест. Çавăнпа та торф кăларас ĕçе нихçанхинчен ытларах вăйлатмалла. Районти вунă колхоз çĕрĕ çинче торф тухакан вырăнсем пур. Ялхуçалăх пайĕ кăçал колхозсене 10.800 тонна торф кăларса хире турттарма план панă. Торфа хĕлле хатĕрлесе турттарма аванрах пулни пуриншĕн те паллă ĕнтĕ. Апла пулсан та, вунă колхозран пĕри те торф хатĕрленĕ çĕрте ялан ĕçлеме çынсем тата туртăм вăйĕ уйăрман. Чкалов ячĕпе тăракан тата «Новая жизнь» колхозсемсĕр пуçне, ытти артельсем пĕри те торф хатĕрлеме тытăнман.

Пĕлтĕр чылай колхозсен кĕллĕ тăпрана извĕçлемелле пулнă. Ку ĕçе пĕр колхозра та туса ирттермен. Кăçал та тăпрана извĕçлеме хатĕрленмеççĕ. Районти ялхуçалăх пайĕн колхозсене известь хатĕрлеттерес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеттерме тăрăшмалла.

Калчасене апат пама, техникăллă культурăсем акакан вырăна çĕнетме кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ нумай кирлĕ пулать. Ку таранччен кĕле планпа палăртниччен чĕрĕкне кăна хатĕрленĕ, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пуçтарма тытăнманпа пĕрех.

Государство колхозсене минераллă удобренисем парса тырпул тухăçлăхне ÿстерме пулăшать. Анчах хăшпĕр колхозсем вăл пулăшупа тивĕçлипе усă курма тăрăшмаççĕ. Кăçал икĕ колхоз кăна хăйсене уйăрса панă минераллă удобрение илсе кайнă. «Красный Октябрь» колхоз председателĕ Шишкин юлташ «пире памалли удобрение «Сельхозснаб» ытти районсенчи колхозсене парса ярать» тесе ÿпкелешет. Анчах вăл хăйсен колхозне панă удобренирен 15 тоннине кăна турттарса тухнă. Хăшпĕр колхоз председателĕсем минераллă удобрение «инçе пирки турттарса каяйман», теççĕ. Çав вăхăтрах Елчĕк районĕнчи колхозсем Канашран 50—70 километрта пулсан та, «инçе» тесе пăхса тăмаççĕ. Вĕсем, хăйсене тивĕçлине илнисĕр пуçне, Канаш районĕнчи колхозсем валли уйăрнине те турттарса каяççĕ. Вăрнар районĕнчи колхозсем те çавăн пекех тăваççĕ.

Канаш сывăхĕнчи «Красное пламя», «Мотор», «Комбайн», Молотов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем хуларан нумай фекали турттарма пултараççĕ. Хулари фекалие хире турттарма ялтан илсе тухассичен те çывăхрах. Анчах фекали турттарассине пĕр колхоз та организацилемен.

Вырăнти удобрени хатĕрлес ĕçе тĕрĕс йĕркелемеиннине те палăртмалла. Колхозсем тислĕке вăхăтран вăхăта кăна турттараççĕ. Вырăнти удобрени турттарма колхозсенче кашни бригадăранах çынсем тата 3—4 лаша е вăкăр уйăрмалла. Вăл çынсене кашни кун хăйсене хушнă ĕçе тутармалла. Вара ĕç нумай хăвăртланма пултарать.

Вырăнти удобрени турттарас тĕлĕшпе колхозсене МТС пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ. Хĕл иртсе каять, МТС ку тĕлĕшпе хăйне панă плана пурнăçлама тытăнман-ха. МТС руководителĕсем: ку ĕçе колхозсем килĕшмен пирки тăваймастпăр, тесе ĕнентересшĕн. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз МТС-па торф турттарма килĕшÿ тунă. МТС халĕ те вăл килĕшĕве пурнăçлама тытăнман.

Йĕпреç районĕнчи «Красный фронтовик» колхозри комсомолецсен примерĕпе хавхаланса, Канаш районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи комсомолецсем те çамрăксене вырăнти удобрени хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе ăмăртса ĕçлеме чĕнчĕç. Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. ВЛКСМ райкомĕ асăннă пуçарăва сарас, мĕнпур çамрăксене ăмăртăва хутшăнтарас тĕлĕшпе нимĕн те туман. Çавна пула районти çамрăксем вăл ăмăртăва хутшăнман.

«Чăваш Коммуни» хаçат бригади:
А. АНДРЕЕВ,
С. АСЛАН,
П. ЩИПЦОВ.

Пуçламăш парторганизацисен ĕç опычĕнчен

Колхоза организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетессишĕн кĕрешни

ВКП(б) Шĕхасан райкомĕн бюровĕ Ленин ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци ĕçĕсем çинчен отчет илчĕ. Парторганизаци секретарĕ А. Филиппов юлташ колхозри коммунистсем пĕрлешнĕ колхоза организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетессишĕн мĕнле кĕрешни çинчен тĕплĕ каласа пачĕ.

Райком бюровĕ, парторганизаци опытне шута илсе, районти колхозсенчи парторганизаци секретарĕсен черетлĕ семинарне Ленин ячĕпе тăракан колхоза ирттерме, унта А. Филиппов юлташ докладне итлеме йышăнчĕ.

Пирĕн хаçат, Ленин ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци ĕçĕсемпе ытти парторганизацисене паллаштарас шутпа, А. Филиппов юлташ райком бюровĕнче тунă доклада кĕскен пичетлет.

Виçĕм çул Ухман ял Советне кĕрекен Ленин ячĕпе тăракан, «Правда» тата «Соревнование» колхозсем пĕрлешрĕç. Колхоз çĕрĕ 1.257 гектара çитрĕ. Уйсем пысăкланчĕç, унта халĕ кучухнехи вăйлă техникăпа тухăçлă ĕçлеме ирĕк.

Колхозăн обществăллă хуçалăхĕ çулсерен çирĕпленсе пырать. Малта пыракан техникăпа усă курни, совет агробиологи науки вĕрентнисене пурнăçлани çĕрĕç культурине ÿстерчĕ. Вăрçăччен 1940 çулта кашни гектартан 7—8-шар центнер тĕштырă туса илнĕ пулсан, 1951 çулта, 937 гектар çинче вăтам шутпа 12-шер центнер тĕштырă пухса кĕртнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх йышĕ тата унăн тухăçлăхĕ ÿсет. Колхозăн пилĕк ферма. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана иртерсе тултарнă.

1951 çулта колхозри доярккăсем кашни ĕнерен 1.170-шер литр сĕт суса илнĕ, вăл 1950 çулхинчен 270 литр ытларах пулать. Раиса Николаевăпа Антонина Малофеева юлташсем хăйсем пăхакан кашни сысна ами пуçне 14-шар çурă пăхса ÿстернĕ. Н. Васильевăпа П. Федорова юлташсем кăçал 107 сурăхран 159 путек илнĕ, вĕсем пурте мăнтăр çитĕнеççĕ.

Колхоз утарĕнче 49 вĕлле пыл хурчĕ пур. Хурт-хăмăр çулсеренех пысăк тупăш парать. 19 гектар çинче улма-çырла йывăççисем ĕрчетнĕ. Иртнĕ çулта улма-çырла 46.347 тенкĕлĕх сутнă. Питомникре 60 пин тĕп ытла çимĕç йывăççисем çитĕнеççĕ. Панулмисемпе çырласем тата йывăççем сутса кăçал 80 пин тенкĕ тупăш илме палăртнă.

Колхозăн çурт-йĕрсем çителĕклĕ. Иртнĕ çулта кăна чăх-чĕпсем валли тăмран стандартлă вите, омшаник, 300 пуç вырнаçмаллăх сурăх вити тунă. Çавăн пекех урапа-çуна лартмалли килкарти, икĕ витнĕ итем тунă. Итемсемпе фермăсем тавра карта тытса çавăрнă. Фермăсем тавра йывăççем лартса тухнă.

Колхозри чылай ĕçсене механизацилелĕ. Иртнĕ çулта икĕ электромотор туяннă. Электричество вăйĕпе авăн çапнă, сурăх çăмне каснă, армансем, улăм турамалли тата тырă вĕтетмелли машинăсем ĕçлеççĕ. Халиччен фермăра ĕçлекенсем выльăхсене шăварма витресемпе шыв йăтнă пулсан, иртнĕ çулти ноябрь уйăхĕнче гидротаран ĕçе янă. Вăл пĕр сухрăмра яхăн аякри шыва фермăсем патне илсе пырать.

Колхоз çулсерен çĕнĕ машинăсем илет. Пĕр çул хушшинче кăна апата пăспа пĕçермелли машина, автомашина, трипер т. ыт. те туяннă.

Колхозăн обществăллă хуçалăхĕ пур енчен те аталанса пынă май, колхозниксен пурнăçĕ лайăхланнăçемĕн лайăхланать. 1951 çулта кашни ĕçкунĕ çине икĕ килограмм тĕштырă, 300 грамм пахча çимĕç, 20 грамм çу, 40 пус укçа, çĕрулми, утă-улăм чылай валеçсе панă.

Парторганизаци хăйĕн пĕтĕм ĕçне колхозăн обществăллă хуçалăхне пĕрмай малалла аталантарас, тырпул тухăçлăхне ÿстерес, выльăх-чĕрлĕх хисепне нумайлатнипе пĕр вăхăтрах унтан илекен тупăша та ялпах пысăклатас тĕллевпе туса пырать.

Колхоз пĕрлешсе пысăкланиччен ялти колхозник-коммунистсем территориллĕ пуçламăш парторганизацинче учетра тăнă.

Пĕрлешнĕ колхозра парторганизаци тусăнах, вăл хăйĕн умĕнче тăракан тĕп задачăна—пултăра хуçалăхăн чи пысăк отраслĕсене пултарулă та пуçарулă кадрсемпе çирĕплетес задачăна пурнăçлама тытăнчĕ. Парторганизаци строительство бригадине ертсе пыма Ильин юлташа, тăваттăмĕш уй-хир бригадин бригадирĕ пулма Андреев юлташа, сад бригадин бригадирĕ пулма Христофоров юлташа çирĕплетме колхоз правленине сĕнчĕ. Правлени те, колхозниксен пухăвĕ те парторганизаци сĕнĕвне ырларĕç. Хуçалăхри ытти отраслĕсене те лайăх кадрсемпе çирĕплетнĕ.

Пуçламăш парторганизаци колхозри ертсе пыракан кадрсен ответлăхне, вĕсен политикăллă пĕлĕвне тата квалификацине ÿстерме тăрăшать. ВКП(б) историне партире тăман актив 14 çын, Сталин юлташ биографине 23 çын кружоксенче вĕренеççĕ. Унсăр пуçне, агрономипе зоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх икĕ курсра 56 колхозник вĕренет.

Парторганизаци, ВКП(б) уставĕ панă правапа усă курса, колхоз правленийĕн хуçалăхри пĕтĕм ĕçĕсене, вăл государство саланийĕсене мĕнле пурнăçланине, колхозăн обществăллă интересĕсене колхозниксен харпăр хăй интересĕçемпе тĕрĕс сыхăнтарса пынипе пыманнине куллен тишкерсе тăрать. Артель уставне пăснисем пулсанах, парторганизаци вĕсене çийĕнчех тÿрлетме тăрăшать.

Тырпулпа выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăша пур майсемпе те ÿстерсе пыма, колхозăн тĕрлĕ отраслĕсене вăйлатма парторганизаци правлени умне пысăк ыйтусем кăларса тăратать. Сăмахран, колхоз ытти çулсенче кирпĕч илсе, укçатенкĕ нумай расходланă. Парторганизаци кирпĕч тăвакан производство организацилеме кирлине палăртрĕ. Правлени çак ĕçе пуçăрса яма П. Никитин юлташа хушрĕ. Вăл ертсе пыракан колхозниксем кĕске вăхăтрах 15 пин кирпĕч туса хатĕрлерĕç. Çакă колхоза çичĕ пин тенкĕ укçа перекетлеме май пачĕ.

Колхоз правленийĕн ĕçне тĕрĕслемелли правăна пурнăçласа, парторганизаци колхоз производствин тĕп ыйтăвĕсене татса парас ĕçе активлă хутшăнать, хуçалăх экономикине тĕплĕ пĕлме тăрăшать. Анчах парторганизаци колхоз правленийĕ тума тивĕç ĕççене хăй çине йышăнмасть. Правленипе таччăн çыхăнса ĕçлет, ăна канашсем парса пулăшать, колхозниксем хушшинче унăн авторитетне çĕклет. Колхоз правленийĕпе унăн председателĕ В. Павлов юлташ парторганизаци кăларса тăратнă сĕнÿсене кирек хăçан та хапăл туса йышăнаççĕ. Çавна май артель правленийĕпе пуçламăш парторганизаци хушшинчи ĕçлĕ çыхăну çирĕпленсе пырать.

Колхоз правленийĕн ĕçĕсене тĕрĕслесе тăрас тĕлĕшпе парторганизаци тĕрлĕ майсемпе усă курать. Çав майсенчен пĕри—парторганизацин усă пухăвĕсенче хуçалăх ыйтăвĕсене сÿтсе явни пулать. «Колхозра ĕçе организацилесси», «Ялхуçалăх ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен», «Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатасси» тата ытти çавнашкал ыйтусене усă пухусенче сÿтсе явни пысăк усă кÿрет.

Малтанхи вăхăтра колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе юлса пычĕ. Ун çинчен парти пухăвĕнче пĕр хут çеç мар сÿтсе явнă. Парторганизаци колхоз правленине фермăсен ĕçне лайăхлатма нумай пулăшрĕ. Выльăх-чĕрлĕх фермисене лайăх кадрсемпе çирĕплетни, вĕсене воспитани пани тата малта пыракансем пек ĕçлеме вĕрентни государство панă плана ирттерсе тултарма, çав вăхăтрах выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне пĕлтĕр 30 процента яхăн ÿстерме май пачĕ.

Колхоз правленийĕ, парторганизаци хушнине пурнăçласа, фермăсенче ĕçлекенсем валли лайăх условисем туса пачĕ. Ферма работникĕсем пурăнакан çурт-йĕрсене юсаса йĕркене кĕртнĕ. Вĕсенче 36 çын валли—кашнин валлиех кровать, тÿшек-çытар, утиял пур. Фермăра ĕçлекенсем пушă вăхăта культурăллă ирттереççĕ. Фермăра библиотека, хĕрлĕ кĕтес уçнă. Савăнăçлă пурăннă чухне ĕç те ăнса пырать, пысăккăн та пысăккăн çитĕнÿсем тăвас килет. К. Григорьевăпа М. Корнилова юлташсем иртнĕ çулта кашни ĕнерен 1.450-шар литр сĕт суса илчĕç пулсан, кăçал вĕсем 1.600-шер литртан кая мар сĕт суса илме сăмах пачĕç.

Çĕрĕç культурине ÿстерес тĕлĕшпе парторганизаци колхоз правленийĕпе пĕрле тимлĕ ĕçлет. Колхозра курăксем акмалли нумай уйлă пуçăçаврăнăшĕ тунă. Пĕлтĕр 50 гектар нумай çул ÿсекен курăксем акнă. Пуçламăш парторганизаци ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опытне колхоз производствинче анлă пурнăçласа пыма кирлине ялан асра тытать.

Иртнĕ çулта колхоз пĕрремĕш хут кăреслĕ майпа 10 гектар çине çĕрулми лартрĕ. Çак участокра, ытти участоксенчипе танлаштарсан, кашни гектартан 32-шер центнер ытларах çĕрулми тухрĕ. Çак опыт çинчен парторганизаци колхозниксене тĕплĕ ăнлантарса пачĕ.

Пуçламăш парторганизаци пуçарнипе колхоз активĕ артель хуçалăхне малалла аталантармалли майсене тĕпчесе вĕренет. Колхоз правленийĕпе парторганизаци колхоз хуçалăхне аталантарма пилĕк çуллăх план тăваççĕ.

Пуçламăш парторганизацин йышĕ пысăк мар пулин те, унăн пултарулăхĕ пур ĕçре те палăрса тăрать. Çакă вăл партире тăман активпа тачă çыхăну тытнипе килет. Практикăллă ĕçре партире тăман актив пуçламăш парторганизацие пулăшу парать.

Активистсем — колхоз производствинчи стахановецсем, большевиксен партине чĕререн парăнса ĕçлекенсем. А. Малофеева, Я. Тихонов, К. Григорьева, Н. Андреев, Т. Андреев, К. Гаврилов тата ытти юлташсем колхоз производствинче хăйсем хастарлă ĕçленипе пĕрлех ытти колхозниксене те малта пыракансем пек ĕçлеме вĕрентеççĕ. Антонина Малофеева кăçал хăй пăхакан кашни сысна ами пуçне 16-шар çура пăхса ÿстерме сăмах пачĕ. Вăл иртнĕ çулта кашни ама пуçне 14-шар çура пăхса ÿстернĕ. Халĕ вăл выльăх-чĕрлĕхе пăхас ĕçри опычĕсем çинчен ытти колхозниксене каласа парать.

К. Гаврилов юлташ ертсе пыракан бригада пур ĕçре те малта пырать. Парторганизаци К. Гаврилов юлташа час-часах политикăллă ĕçе хутшăнтарать. Сăмахран, партин усă пухăвĕнче колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пыни тата виçĕ çуллăх плана пурнăçласси çинчен сÿтсе явма хатĕрленнĕ чухне, Гаврилов юлташ коммунистсемпе пĕрле çак ыйтăва хатĕрлес ĕçе активлă хутшăнчĕ. Вăл фермăсенче пулчĕ, унти ĕçсемпе тĕплĕ паллашрĕ, хăйĕн шухăшне пухура каласа пачĕ.

Партире тăман активăн паха сĕнĕвĕсене шута илсе, пуçламăш парторганизаципе колхоз правленийĕ тĕрлĕ ĕçсем туса ирттерчĕç. Фермăсем патне шыв илсе пыма гидротаран тунă, шыва ăшăтса парассине организацилерĕ, улăм туракан, тырра вĕтетекен машинăсене электричество вăйĕпе ĕçлеттерме тытăннă. Выльăх-чĕрлĕх витисене хутса ăшăтма кăмакасем тутарнă.

Партире тăман активистсен лайăх ĕçĕ çинчен нумай тĕслĕхсем илсе кăтартма пулать. Вĕсемпе тачă çыхăнни парторганизацие колхоз хуçалăхне тĕрĕс ертсе пыма пулăшать. Парторганизаци, колхоз правленийĕпе пĕрле, активистсен семинарĕсемпе канашлăвĕсене ирттерет, вĕсенче производствăри ĕçсем çинчен сÿтсе яваççĕ, политикăллă докладсемпе каласусем ирттереççĕ.

Пуçламăш парторганизацин активлă помощникĕ—комсомол. Комсомолецсем выльăх-чĕрлĕх фермисенче, строительствăра, кок-сагыз, уй-хир бригадисенче хăйсен пуçарулăхне кăтартаççĕ.

Çамрăксем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе комсомол организацийĕ йĕркелесе пырать. Кашни эрнерех çамрăксен ыйтусемпе ответсен каçĕсене ирттереççĕ. П. Иванов комсомолец ертсе пыракан драмкружок юлашки виçĕ уйăх хушшинче 4 спектакль лартса пачĕ. Художествăллă пултарулăх кружокĕн ĕçне 26 çамрăк хутшăннă.

Пуçламăш парторганизаци колхозри партире тăман активпа ĕçлессине никçан та манса кăнармасть. Вăл вĕсене практикăллă ĕçре ÿсме, хăйсен тавракурăмне пысăклатма, вĕсен ăнланулăхне хăпартма пулăшать. Партире тăман активпа çыхăнса ĕçлесси, ăна воспитани парасси парторганизацин пысăк задачисенчен пĕри пулса тăрать.

Кирек мĕнле ĕçре те колхозри коммунистсем производствăра хăйсен ĕçченлĕхне, пуçарулăхне кăтартаççĕ. Çакă парторганизаци хăйĕн вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухнипе килет. П. Андреев, И. Захаров, Л. Семенов, А. Борисов, Л. Ильин коммунистсем уй-хир бригадисенче ĕçлеççĕ.

Коммунистсем колхоз производствинче мĕнле ĕçленине парторганизаци куллен тĕрĕслесе тăрать. Пĕлтĕр тырпул тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе П. Андреев коммунист ертсе пыракан бригада малта тухрĕ. Çак бригада хăйĕн пĕр участокĕнче 28 гектар çинче—кашни гектартан 22-шер центнер ыраш пухса илчĕ. Парторганизаци çак бригадăри колхозниксен опытне сарса пырать.

Колхоз председателĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ В. Павлов коммунист—пуçарулă руководитель, производствăри пур отраслĕсене те лайăх пĕлет. Павлов юлташ обществăллă хуçалăха тĕреклетсе пыма çĕнĕ майсем тупма тăрăшать. Вăл паянхи кунпа çеç пурăнмасть, колхозăн малашлăхне курса тăрать, пысăк планĕсем туса хатĕрлет. Çавăншăн юратаççĕ те ăнтă ăна артель членĕсем.

Пуçламăш парторганизаци колхозниксен социализмлă ăмăртăвне организацилесе ертсе пырасси çине тимлĕ пăхать. Бригадăсенче, фермăсенче тата хуçалăхăн ытти участокĕсенче пухусем ирттернĕ, илнĕ обязательствăсене сÿтсе явнă, социализмлă ăмăрту договорĕсем çырнă. Колхозниксем кÿршĕри Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсемпе ăмăртса ĕçлеме тытăнчĕç.

Колхозниксем кăçал çакăнашкал кĕрешеççĕ: акăнакан пĕтĕм лаптăкра кашни гектартан 110 пăтран çак мар тĕштырă, 850 пăт çĕрулми пухса илмелле; кашни 100 кĕсререн 60 тиха, кашни 100 ĕнерен 90 пăру, кашни сысна амичен 16-шар çура, кашни 100 сурăхран 110 путек илсе пăхса ÿстермелле; кашни ĕнерен 1.500 литр сĕт, кашни чăхран 90 çăмарта, кашни сурăхран 3 килограмм çăм касса илмелле.

Çак обязательствăсене палăртнă чухне эпир ВКП(б) Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительстви пирĕн республика умне лартнă задачăсене шута илнĕ.

Çак кунсенче коммунистсем çитес çуракине хатĕрленес ĕçсем мĕнле пулса пынине тĕрĕслесе тухрĕç. Колхоз çуракине хатĕрленсе çитнĕ теме те юрать. Машинăсене юсанă, вăрлăхсене тасатнă, минераллă удобренисем кÿрсе килнĕ. Конюхсем хушшинче лашасене çуракине хатĕрлес тĕлĕшпе социализмлă ăмăрту саралнă.

Колхозниксене коммунизмлă воспитани парас, вĕсене партипе правительство решенийĕсене пурнăçлама мобилизацилес ĕçре докладсем, лекцисем, каласусем, хаçатсем вуласа пани, наглядлăй агитаци тата кино кăтартни пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Политикăллă агитаци агитколлектив туса пырать. Агитколлективра коммунистсемпе комсомолецсем, учительсемпе партире тăман активистсем—пурĕ 25 çын. Агитаторсене парти пухăвĕнче çирĕплетнĕ, вĕсемпе семинарсем ирттеретпĕр.

Кашни агитатор каласусенче наглядлăй пособисемпе, художествăллă литературăпа усă курма тăрăшать. Агитаторсем хаçат-журналсем, «Агитатор блокночĕ» çырăнса илеççĕ, чылайăшĕн хăйсен библиотека пур.

Колхоз библиотеки пысăк мар-ха. Унта 500 кĕнеке кăна. Колхозниксен кĕнекесем илсе вулас кăмăлĕ пысăк. Сăмахран, О. Иванова колхозница кăçал А. Фадеевăн «Çамрăк гварди», Б. Турханăн «Йăмраллă ял» романĕсене вуласа тухнă. Халĕ вăл А. Пушкинăн «Евгений Онегин» поэмине вулать. К. Андреев Б. Симоновăн «Дни и ночи» повĕçне вуласа тухнă. Агитаторсем колхозниксене библиотекăна çĕнĕрен мĕнле кĕнекесем килни çинчен пĕлтерсе тăраççĕ.

Колхозра политикăллă-культурăллă ĕç вăйланса пыни çакăнтан та лайăх курăнать: иртнĕ 10 уйăх хушшинче агитаторсем 417 политикăллă каласу, 19 лекципе доклад ирттернĕ, 43 хут кино кăтартнă, 17 спектакльпе концертсем лартса панă, колхозри «Ленин çулĕпе» стена хаçачĕ 9 номер, бригадăсенчи боевой листоксем 75 номер тухнă.

Лекцисемпе докладсем тĕрлĕ темăсем тăрăх пулаççĕ. Юлашки вăхăтра çак темăсем тăрăх лекцисемпе докладсем ирттернĕ: «Аслă Сталин—пирĕн çĕнтерÿсен организаторĕ», «Совет Союзĕ—мир тĕрекĕ», «Ялхуçалăх артелĕн Уставĕ—колхоз пурнăçĕн тĕп законĕ», «1952 çулта вăйлă тырпул туса илмелли майсем» тата ытти те. Колхозниксем лекцисемпе докладсене юратса итлеççĕ. Нумаях пулмасть И. Баранов юлташ «Тĕнчери лару-тăру çинчен» тунă лекцие 250 колхозник ытла итлерĕ.

Парторганизаци куллен ертсе пынипе агитаторсем колхозниксене вăйлă тырпул илме, артель хуçалăхĕн пур отраслĕсене те аталантарассишĕн кĕрешме мобилизацилеççĕ.

Коммунистсем хăйсем те кирек хăçан та примерлă пулмалла. Коммунист партиллĕ ĕçе активлă хутшăнмалла, ĕçсынисене большевиксен партин политикине ăнлантарса памалла, парти кăтартăвĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешмелле, массăсен организаторĕ пулмалла.

Коммунистсене парти ĕçне активлă хутшăнтармалли чи паха майсенчен пĕри вăл—партпорученисем пани. Пуçламăш парторганизаци коммунистсене партпорученисем панă чухне вĕсен опытне, шухăшлăвне, пултарулăхне шута илет. Чылай коммунистсене кĕске вăхăтлăха мар, нумай вăхăтлăха партиллĕ ĕç панă. В. Павлов юлташ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăртăва ертсе пырать, И. Алексеев юлташ бригадăсенче боевой листоксем кăларассине организацилет, Л. Семенов юлташ колхозниксем хушшинче санитари пропагандине туса пырать, П. Андреев юлташ—колхозри стена хаçат редакторĕ. Вăл тĕрлĕшпе хаçат колхоз пурнăçне, унăн ĕçне, уйрăм бригадăсемпе колхозниксен опытне çутатать, колхозра критикăпа самокритикăна вăйлатса пыма пулăшать, колхозниксене ĕç çине коммунистла пăхма вĕрентет.

Парторганизаци коммунистсене кĕске вăхăтра пурнăçламалли партиллĕ ĕçсем те парать. Вĕсем йышăннă решенисене пурнăçланине тĕрĕслеççĕ е парти пухăвĕнче сÿтсе явма тĕрлĕ ыйтусем хатĕрлеççĕ.

Парторганизаци коммунистсем хăйсене хушнă ĕçе мĕнле туса пынипе тăтăшах тĕрĕслет. Çакă коммунистсем хушшинчи дисциплинăна çирĕплетме пулăшать.

Коммунистсем «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» кружокра вĕренеççĕ. Хутла салантарах вĕренекен коммунистсемпе кружок руководителĕ И. Баранов юлташ консультацисем ирттерет. Кружокра халĕ 17 занятии пулнă.

Парти пухăвĕ воспитани шкулĕ пулнине пуçламăш парторганизаци асра тытать. Иртнĕ çулта 23 пуху ирттернĕ, вăл шутран 12 пуху—усă пухусем пулнă.

Пуху пулассп çинчен коммунистсем малтанах пĕлеççĕ. Вĕсем парти пухăвне тĕплĕ хатĕрленсе пыраççĕ, ыйтусене активлă сÿтсе яваççĕ. Черетлĕ пухура иртнĕ пухура йышăннă решенисем мĕнле пурнăçланса пыни çинчен, уйрăм коммунистсем хăйсене панă порученисене мĕнле пурнăçлани çинчен парторганизаци секретарĕ кĕскен каласа парать.

Пуçламăш парторганизаци ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур. Уйрăмах парти ретне çĕнĕ çынсем илес тĕлĕшпе ĕçсем начар. Колхозра парти ретĕнче пулма тивĕçлĕ активистсем, колхоз производствинче малта пыракансем, ĕçре тĕрĕсленнĕ çынсем сахал мар.

Колхозăн малашлăхĕ пысăк. 1952 çулта фермăсенчи мĕнпур ĕçсене механизацилемелле, çĕнĕ пысăк клуб, ача сачĕ тумалла. Вĕсене тума строительство материалĕсем хатĕрлеççĕ. Яла радиофикацилеме хатĕрленсе çитнĕ.

Колхоз сачĕпе юнашар шыв усăсăр юхса выртать. Парторганизаци çак шыва пĕвелесе пысăк кÿлĕ тума ыйту лартрĕ. Кунти шывпа садри çимĕç йывăççисене, пахча çимĕçсене искусственнăй майпа шăварма пулать.

Тырпул тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ÿстерсе пырасси—тĕп задача. План тăрăх колхозăн тĕштырă культурисен тухăçлăхĕ вăрçăччен хинчен виçĕ хут, çĕрулми тухăçлăхĕ икĕ хут ÿсмелле. Ĕнесенчен 1940 çулхинчен тăватă хут нумайрах сĕт суса илмелле.

Çапла майсемпе парторганизаци колхозниксене артель хуçалăхне малалла аталантарассишĕн кĕрешме мобилизацилесе пырать.

РАЙОНТИ ХАÇАТСЕМ ÇĔКЛЕНĔ ПЫСĂК ЫЙТУСЕМ

ЯЛ ЭКОНОМИКИПЕ КУЛЬТУРИ ÿССЕ ПЫРАТЬ

Вăрмар районĕнчи «Хĕрлĕ ялав» хаçатра кăмăла каякан заметкăсемпе статьясем пичетленсе тухаççĕ. Юлашки номерсенче «Колхозăн çĕнĕ гидроэлектростанци пулать», «Радиоприемниксем туянаççĕ», «Колхозăн 4 автомашина», «Çĕнĕ клуб», «Яла радиофикацилерĕ» ятлă заметкăсем пичетленĕ. Çак заметкăсем пирĕн колхозсем организаципе хуçалăх енĕпе çирĕпленсе пынине, колхозниксем телейлĕ те савăнăçлă пурнăçпа пурăннине, хулапа ял хушшинчи уйрăмлăх пĕтсе пынине кăтартаççĕ. Февралĕн 7-мĕшĕнче пичетленсе тухнă «Яла радиофикацилерĕ» ятлă заметкăра «Хĕрлĕ ялав» хаçат çапла çырать:

«Вăтакас ялĕ çĕнелсе, лайăхланса пырать. Кашни килтех Ильич лампочкисем çутăтаççĕ. Çак кунсенче колхозра радиоузел лартса, кашни киле радио кĕртсе пачĕç. Урамра та радио сасси хăватлăн илтĕнет!

Çĕнелнĕ ял хула пекех туйăнать».

Пирĕн колхозлă ялсенче халĕ клубсем, библиотекăсем, каласакан киноустановкăсем, радиоузелсем, медицина пункчĕсем, шкулсем, магазинсем ĕçлеççĕ. Колхозсен обществăллă çурт-йĕрĕсемпе колхозниксен пÿрчĕсенче Ильич лампочкисем çунаççĕ.

Колхозлă ялсен экономикипе культури ÿснине анлă çутатса, «Хĕрлĕ ялав» хаçат пысăк ĕç тăвать.

СТРОИТЕЛЬСТВО СЕЗОННЕ БОЛЬШЕВИКЛА ИРТТЕРЕР

Комсомольски районĕнчи «Октябрь ялавĕ» хаçат çак кунсенче колхозсенче строительство сезонне хатĕрленес ыйтупа ятарласа статья пичетлерĕ. Хаçат пĕлтернĕ тăрăх районти колхозсем иртнĕ çул выльăх-чĕрлĕх витисем тумалли плана нумай енĕпе ирттерсе тултарнă. Вырăнти строительство материалĕсемпе усă курасси анлă саралса пырать. Хăшпĕр колхозсенче саман кирпĕчрен витесем тăваççĕ, хăшпĕр колхозсенче—кирпĕч çапаççĕ.

Кăçал районти колхозсенче строительство енĕпе татах та пысăкрах ĕçсем тума палăртнă. Районти 8 колхозра кирпĕч çапас ĕçе организацилеççĕ. Государство районти колхозсене обществăллă çурт-йĕрсем тума 7 пин кубометр ытла йывăç парса тата кивçен укçа парса пулăшать. «Октябрь ялавĕ» хаçат колхозсене государство укçи-тенкипе пĕлсе усă курма чĕнет. Кăçалхи строительство сезонĕнчи задачăсем çинчен çырнă статья çак сăмахсемпе вĕçленет:

«Строительство ăнăçлăхне хăй кунĕсем татса параççĕ. Халĕ, вăхăта сая ямасăр, çураки пуçланиччен, йывăç касса хатĕрлемелле, касна йывăçа турттармалла... Кашни колхозра строительство бригади пулмалла. Строительство бригадисем хушшинчи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, кăçалхи строительство сезонне большевикла ирттерер».

Пысăк ыйтăва вăхăтра тапратать «Октябрь ялавĕ» хаçат. Колхозсенчи строительство ĕçĕшĕн куллен тăрăшни вăл обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн тăрăшни пулать.

ТЕМИÇЕ ÇЫРСА ТА ОТВЕТ ИЛЕЙМЕРĔМĔР

Советски районĕнчи «За коммунизм» колхоз членĕсен пухăвĕнче ревизи комиссийĕ отчет туса панă. Пуху, пĕтĕмĕшпе илсен, ревизи комиссийĕн актне çирĕплетнĕ. Анчах, иккĕленмелле пулнă пирки, пуху пĕр ыйтăва татса параймасăр хăварнă. Вăл акă мĕнле ыйту пулнă: нимĕн сăлтавсăрах Моляк ялĕнче пулнă колхозра 4.200 тенкĕ укçана ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе янă. Колхозниксен пухăвĕ çак ĕç тĕрĕссипе тĕрĕс марри çинчен районти ялхуçалăх пайĕнчен ыйтса пĕлме хушса хăварнă.

«Совет ялавĕ» хаçат çак ыйтупа колхозри ревизи комиссин председателĕн Я. Вишневский юлташăн çырăвне пичетлесе кăларнă. Вишневский юлташ ялхуçалăх пайĕнчи уйрăм работниксене колхозниксен ыйтăвĕсем çине бюрократла пăхнăшăн хаçатра çапла критиклать:

«Пирĕн ыйту çине районти ялхуçалăх пайĕнче, вăхăт чылай иртрĕ пулин те, ответ памарĕç. Вара 1951 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕнче инструктор-бухгалтера К. Арсентьев юлташа ыйту çырса патăмăр. Вăл та, темиçе хут астутарсан та, ответ памарĕ. Юлашкинчен ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ В. Шумилов юлташ патне çыртăмăр. Унтанпа икĕ эрне иртрĕ, çаплах ответ çук».

Ĕçсынисемпе колхозсен ыйтăвĕсене вăхăтра пăхса тухасси вăл—совет учрежденийĕсен пирвайхи тивĕçĕ. Ĕçсынни депутачĕсен Советски район Совет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕнче ку çине тимлĕ ĕçлемеççĕ-ха. «Совет ялавĕ» хаçат çырура асăннă çитменлĕхе кĕске вăхăтра пĕтерме, «ĕçсынисен ыйтăвĕсем çине бюрократла пăхмашкăн парахма» чĕнет.

Социальнăй обеспечени органĕсен ĕçне вăйлатмалла

ССР Союзĕн ĕçсынисем ватăлсан тата чирлесен е ĕçлейми пулсан материальнăй пулăшу илмелли правăпа усă кураççĕ. «Ку право,— тенĕ Сталинла Конституцин 120-мĕш статьинче,— рабочисемпе служащисене государство шутĕнчен социальнăй страховани тăвассине анлă сарса пынипе, ĕçсынисене медицина пулăшăвĕ тÿлевсĕр пынипе, ĕçсынисене усă курмашкăн курортсем нумай туса панипе пурнăçа кĕрсе пырать».

Совет правительстви ĕçсынисене пулăшма нумай укçа-тенкĕ уйăрса парать. Юлашки пилĕк çул хушшинче кăна ку тĕлĕшпе пирĕн республикăра çулсерен 80-шар миллион тенкĕ укçа расходланă. Çак укçасем чылайăшĕнчен вăрçă тата ĕç инвалидĕсене, вăрçăра вилнĕ воинсен çемйисене тата ыттисене те тÿленĕ.

Инвалидсене ĕçе вырнаçтарма, çын чирлесен хăйĕн специальноçĕпе ĕçлейми пулсан урăх професси вĕрентме, инвалидсен квалификацине ÿстерме, вĕсене санаторисемпе курортсенче сыватма социальнăй обеспечени органĕсен куллен тăрăшса ĕçлемелле.

Инвалидсен пурнăçне çăмăллатма республикăра инвалидсен çурчĕсем уçнă. Çавăн пекех протезсемпе ортопедически хатĕрсем тăвакан мастерской пур. Унта протезсене пурне тенĕ пекех государство шучĕпе тăваççĕ.

Инвалидсене ĕçе хутшăнтарма 26 артель организациленĕ. Чирлесен хăйсен специальноçĕпе ĕçлейми пулнă çынсем кунта çĕнĕ специальность вĕренсе илеççĕ.

Çавăн пекех вăхăтлăха ĕçлейми пулнă çынсем валли колхозсенче 800 ытла обществăллă пулăшу кассиĕ ĕçлет. Ку кассăсем вăрçăра вилнĕ воинсен çемйисене, инвалидсене, ватă колхозниксемпе колхозницăсене, тăлăх ачасене куллен пулăшса тăраççĕ.

Юлашки çулсенче инвалидсене пулăшу парасси чылай лайăхланчĕ. Пенсионерсем хăйсем илме тивĕçлĕ укçана вăхăтра илеççĕ.

Анчах та социальнăй обеспечени органĕсен ĕçĕсенче чылай çитменлĕхсем пур-ха. Сăмахран, Шупашкар хула Совет исполкомĕн социальнăй обеспечени пайĕнче пенси ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пулнă. Чылай вăхăт хушши хăшпĕр граждансене пенси укçи тĕрĕс мар тÿленĕ. Хăшпĕр районсенчи сутĕç пайĕсем учительсене ĕçлени çинчен тĕрĕс мар документсем тăрăх справкăсем панă. Хăшпĕр чухне тата ыйту паракан çын сăмахпа каланине ĕненнипех документсем хатĕрленĕ. Тĕслĕхрен, Çĕмĕрле районĕнчи сутĕç пайĕ учитель пулса ĕçленĕ Разумов юлташа тĕрлĕ вăхăтра 9 справка панă. Çав справкăсем Разумов юлташ хăш вăхăтра ăçта ĕçленине пĕрре те тĕрĕс кăтартмаççĕ.

Канаш хулинчи социальнăй обеспечени пайĕнче ĕçлекен аслă бухгалтер В. Ф. Федоров нумай вăхăт хушши пенси укçи хăйне тивĕçлинчен ытларах илсе тăнă.

Пенси йĕркине пăсни социальнăй обеспечени пайĕсенче ĕçлекен хăшпĕр работниксем хăйсен квалификацине ÿстерменнинчен, шанса панă ĕçе çителĕксĕр туса пынинчен килнĕ.

Пенси укçине пенсионерсене вăхăтра тÿлени пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çапах та хăшпĕр районсенче çак ĕç çине сÿрĕккĕн пăхаççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи хăшпĕр ял Совечĕсенче пенси укçине илме пенсионерсен хăйсен çÿреме тивет. Ку вăл ял Совечĕсенчи ответлă работниксем пенси йĕркине пурнăçламаннине кăтартать. Закон тăрăх пенси укçине киле леçсе памалла.

Районсемпе хуласенчи социальнăй обеспечени органĕсен пенси укçине вăхăтра тÿленине куллен тĕрĕслемелле. Район тата хула Совет исполкомĕ çумĕнчи пенси комиссийĕн ответлăхне хăпартмалла.

Канашри протезнăй мастерской иртнĕ çулăн вĕçĕнче начар ĕçленипе инвалидсем протезсем вăхăтра илеймесĕр тăнă.

Чăваш АССР Сывлăх министерстви халиччен те инвалидсене моторпа ĕçлекен коляскăсемпе çÿреме вĕрентессине йĕркелемен. Çавна пула социальнăй обеспечени складĕсенче выртакан коляскăсене инвалидсем илеймеççĕ. Ку çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтерме тăрăшмалла. Çавăн пекех сывлăх органĕсен районсенчи ĕçе юрăхлине тĕрĕслекен комиссисене пысăк квалификациллĕ врачсене уйăрасси çине тимлĕн пăхмалла. Социальнăй обеспечени тата сывлăх органĕсем çак комиссисене çителĕклĕ пулăшсан инвалидсен ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтерме пултараççĕ.

Канаш, Вăрмар, Шăмăршă, Куславкка т. ыт. хăшпĕр районсенче инвалидсене ĕçе хутшăнтарасси япăх пырать. Район тата хула Совет исполкомĕсен социальнăй обеспечени пайĕсен инвалидсене ĕçе вырнаçтарассине лайăхлатассишĕн куллен тăрăшмалла. Кунсă пĕрлех районсенчи социальнăй обеспечени пайĕсен колхозсенчи пулăшу кассисен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăмалла.

Социальнăй обеспечени органĕсен хăйсем умĕнче тăракан задачăсене чыслă пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя, пултарулăха хурса ĕçлемелле, ĕçсынисен ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн тăрăшмалла.

П. ВАСИЛЬЕВ,
Чăваш АССР Социальнăй обеспечени министрĕн заместителĕ.

Пропагандистсене пулӑшма

Республика ялхуҫалӑхӗн ҫӗнӗ ӳсӗмӗсемшӗн

СССР халӑх хуҫалӑхне малалла аталантарса пымалли государство планне 1951 ҫулта тултарнин итогӗсем пирӗн социализмлӑ Тӑван ҫӗршывӑн экономикипе культури хӑватлӑн ҫӗкленнине, пирӗн ҫӗршыври ӗҫсыннисен пурнӑҫӗ лайӑхланнӑҫемӗн лайӑхланнине яр-уҫҫӑн кӑтартса параҫҫӗ. Ҫак ҫав тери паллӑ ҫитӗнӳсене совет халӑхӗ Ленин—Сталин аслӑ партийӗ ертсе пынипе турӗ.

СССР халӑх хуҫалӑхӗн мӗнпур отраслӗсене малалла аталантарнипе пӗрлех 1951 ҫулта тырпул тухӑҫлӑхне хӑпартас, обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх йышне тата унӑн продуктивноҫне ӳстерес, ҫавӑн пекех колхозсене организаципе хуҫалӑх енчен тӗреклетес тӗлӗшпе чаплӑ ҫитӗнӳсем тунӑ. Пӗтӗр пӗрчӗллӗ тырӑсен валовӑй тухӑҫӗ 7 миллиард та 400 миллион пӑта ҫитнӗ. Пирӗн ҫӗршыв иртнӗ ҫул, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, апат ҫимӗҫ культурисен тухӑҫлӑхне ӳстернӗ, ҫавӑн пекех ҫӗр мамӑк, сахӑр кӑшманӗ тухӑҫлӑрах туса илнӗ. 1951 ҫулта мӗнпур культурӑсем акнӑ ҫӗр лаптӑкӗ 1950 ҫулхинчен 6,7 миллион гектар ытларах пулчӗ.

Колхозсемпе совхозсенче обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ те ӳссе пычӗ. 1951 ҫулта колхозсемпе совхозсенчи выльӑхсен йышӗ пӗтӗм выльӑх хисепӗнчен ытларахӑш пайӗ пулса тӑчӗ.

Колхозсем, вӑрман хуҫалӑхӗсем, машина-трактор тата вӑрман станцийӗсем, ҫавӑн пекех Совет Союзӗн Европӑри пайӗнчи ҫеҫенхирлӗ тата вӑрман-ҫеҫенхирлӗ районсенчи совхозсем 1951 ҫулта 745 пин гектар ҫине йывӑҫ лартнӑ.

1951 ҫулта ялхуҫалӑхӗн техникӑллӑ никӗсӗ тата ытларах тӗрекленчӗ.

Ялхуҫалӑхӗ ҫӗнӗ техникӑпа пуянланса пыни колхозсемпе совхозсенче ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ытларах механизацилеме пулӑшрӗ. Иртнӗ ҫул колхозсенчи пӗтӗм уй-хир ӗҫӗн виҫӗ пайӗнчен икӗ пайне ытларах машина-трактор станцийӗсен вӑйӗпе тунӑ. Колхозсенче ҫуха ӗҫӗсене пӗтӗмӗшпе тенӗ пекех тата акассине тӑватӑ пайран виҫӗ пайне механизациленӗ, тӗштырӑ акнӑ пӗтӗм лаптӑкран 60 процентне ытла комбайнсемпе пуҫха кӗртнӗ. Тырпул ытларах акса тӑвакан районсенче тӗштырӑсен 85—95 процентне комбайнсемпе пухса кӗртнӗ. Совхозсенче ялхуҫалӑхӗнчи тӗп ӗҫсене пурне те тенӗ пекех механизацилесе ҫитернӗ.

1951 ҫулта ялхуҫалӑхне механизациленипе пӗр вӑхӑтрах ӑна электрификацилес енӗпе те пысӑк ӗҫсем туса ирттернӗ. Авӑн ҫапас, выльӑх апачӗ хатӗрлес, шыв парса тӑрас, ӗне сӑвас, ҫӑм илес ӗҫсенче электроэнергипе усӑ курасси чылай ӳснӗ.

Ялхуҫалӑхне механизацилени. колхозсенче малта тӑракан агротехника ӗҫӗсене ытларах пурнӑҫа кӗртме май пачӗ.

Большевиксен партийӗ, Совет правительстви тата Сталин юлташ куллен тӑрӑшнипе иртнӗ ҫул Чӑваш республикинчи ӗҫсыннисем те паллӑ ӳсӗмсем турӗҫ. Пирӗн республикӑри колхозсем 1951 ҫулта тӗштырӑ 1950 ҫулхинчен ытларах туса илчӗҫ, тырпулсене пухса кӗртес ӗҫе халичченхинчен организованнӑрах ирттерчӗҫ. ҫавна пула государствӑна тырӑ памалли плана срокчен икӗ уйӑх маларах тултарчӗҫ. Республика ҫавӑн пекех государствӑна ҫӗрулми, ҫӑм, утӑ, кантӑр вӑрри, йӗтӗн вӑрри, кок-сагыз тата нумай ҫул хушши ӳсекен курӑксен вӑрлӑхӗ памалли плана та срокчен тултарчӗ. 1951 ҫулта пирӗн колхозсем государствӑна 1950 ҫулхинчен ытларах тӗш тырӑ 2 087 600 пӑт, ҫӑм 659 центнер, утӑ 2.595 тонна, йӗтӗн вӑрри 7.800 пӑт, кантӑр вӑрри 24.200 пӑт, нумай ҫул хушши ӳсекен курӑксен вӑрри 9.720 пӑт т. ыт. пачӗҫ. Ҫавӑн пекех аш-какай, сӗт тата ҫӑмарта иртнӗ ҫулхинчен ытларах панӑ.

Республикӑри нумай колхозсем 1951 ҫулта тухӑҫлӑ тӗштырӑ туса илчӗҫ. Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз кашни гектартан ыраш 168 пӑт, сурхи тулӑ—237.6 пӑт; Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз ыраш 157 пӑт, кӗрхи тулӑ 153.6 пӑт, сурхи тулӑ 129 пӑт; Чкаловски районӗнчи «Гвардеец» колхоз ыраш 134,4 пӑт пухса илнӗ. Вӑрмар районӗнчи «Дружба» колхозри М. Филиппова юлташӑн бригади кашни гектартан ыраш 198 пӑт, Ҫӗрпӳ районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхозри Л. Тихонова юлташӑн бригади 35.8 гектар ҫинчен 195,6-шар пӑт туса илнӗ.

Республикӑра обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли виҫӗ ҫуллӑх плана тултарас енӗпе те пысӑк ӗҫсем туса ирттернӗ, нумай колхозсен фермисенче выльӑх-чӗрлӗх халӗ виҫӗ ҫуллӑх планпа палӑртнинчен чылай ытларах.

Иртнӗ ҫул ялхуҫалӑхӗнче тунӑ ҫитӗнӳсем пирӗн ҫитес ҫулсенче лайӑхрах ӗҫлеме май пурри ҫинчен калаҫҫӗ. Мӗнпур тырӑсен тухӑҫлӑхне хӑпартнипе пӗрлех, пирӗн выльӑх-чӗрлӗх йышне тата унӑн тухӑҫлӑхне ӳстерме те, ялхуҫалӑх артелӗсене пур енлӗн аталантарса пыма та лайӑх условисем пур.

ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ Чӑваш АССР-ӗнчи ялхуҫалӑхӗ умне ҫакӑн пек задачӑсем лартрӗ: ҫитес ик-виҫӗ ҫул хушшинче колхозсенче тӗштырӑ тухӑҫлӑхне гектар пуҫне 18 центнертан кая мар ӳстермелле кок-сагыз тухӑҫлӑхне гектар пуҫне—22 центнера, йӗтӗн-Iолгунец тухӑҫлӑхне—5 центнера, кантӑр сӳсӗн тухӑҫлӑхне—6 центнера, махорка тухӑҫлӑхне—15 центнера, ҫӗрулми тухӑҫлӑхне—160 центнера, тымарҫимӗҫ тухӑҫлӑхне—350 центнера, нумай ҫул ӳсекен курӑксен тухӑҫлӑхне—35 центнера, пӗр ҫул ӳсекен курӑксен тухӑҫлӑхне—30 центнера, силос валли акакан культурӑсен тухӑҫлӑхне—300 центнера ҫитермелле. Кунпа пӗрлех ытти ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне те чылай хӑпартмалла.

Обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх продуктивноҫне хӑпартас енӗпе ҫак задачӑсене пурнӑҫламалла: ҫитес ик-виҫӗ ҫул хушшинче кашни ӗнерен 1.800 килограмм сӗт суса илмелле, кашни сурӑхран—3,5 килограмм ҫӑм касса илмелле, кашни чӑхран 110 ҫӑмарта илмелле.

Ҫак пысӑк задачӑсене пурнӑҫлама пирӗн республикӑн пур майсем те ҫителӗклӗ. 1952 ҫулта партипе правительство пирӗн республикӑна тӗрлӗ ялхуҫалӑх машинисем нумай параҫҫӗ. МТС-сем валли ҫӗнӗрен 360 трактор, вӗсенчен 300-шӗ ДТ-54 гусеничнӑй тракторсем, илсе килмелле, 350 комбайн, автобензовозсем, автомашинӑсем, МТС мастерскойӗсем валли оборудованисем, пилӗк корпуслӑ трактор плугӗсем—600, трактор культиваторӗсем—350, трактор сеялкисем—300, пропашной культиваторсем—60, ҫӗрулми лартмалли тата кӑлармалли машинӑсем, кок-сагыз акмалли сеялкӑсем, тырпул тасатмалли машинӑсем, курӑк вӑррисене шӗкӗлчемелли молотилкӑсем, силосорезкӑсем т. ыт. те нумай илсе килмелле.

Ҫак пуян техникӑпа пӗлсе усӑ курасси—пирӗн колхозсен, МТС-сен ответлӑ задачи. Партипе правительство панӑ пысӑк пулӑшу пирӗн колхозсене организаципе хуҫалӑх енчен татах тӗреклетме, колхозсенче тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерме, обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх йышне хӑвӑрт ӳстерме, унӑн продуктивноҫне хӑпартма питӗ лайӑх майсем туса парать.

Ялхуҫалӑхне 1952 ҫулта аталантармалли план пирӗн колхозсем умне ҫӗнӗ задачӑсем кӑларса тӑратрӗ. Пирӗн колхозсемпе МТС-сен кӑҫал тӗштырӑ культурисен тухӑҫлӑхне, уйрӑмах сурхи тулӑ тухӑҫлӑхне, чылай ӳстермелле. Кӑҫал колхозсенчи акмалли ҫӗр лаптӑкӗ те ӳсмелле, уйрӑмах техникӑллӑ культурӑсем—кок-сагыз, кантӑр, йӗтӗн, махорка, хӑмла акса тумалли ҫӗрсен лаптӑкне ӳстермелле. Кунпа пӗрлех кӑҫал пирӗн кӗрпене пӑрҫа культурисем—пӑрҫа, вир, хуратул т. ыт. акса тӑвасси юлса пынине пӗтермелле.

Обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх йышне ӳстерме тата вӗсен тухӑҫлӑхне хӑпартма кирлӗ услови вӑл—выльӑх апачӗ акса тӑвасси, утӑ, силос хатӗрлесси тата ытти йышши апат ҫителӗклӗ хатӗрлесси пулса тӑрать.

Пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илесси тата ҫӗрӗҫ культурине хӑпартасси машина-трактор станцисенчен нумай килнине пурте пӗлсе тӑраҫҫӗ. Малта пыракан трактор бригадисен опычӗ ҫакна кӑтартса пачӗ: трактор бригадисем колхозсенчи уй-хир бригадисемпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлесен, кашни колхозрах тӑтӑшах тухӑҫлӑ тырпул туса илме пулать. Анчах ҫакна ӑна кашни МТС, кашни трактор бригади лайӑх ӗҫленипе кӑна пурнӑҫа кӗртме пулать.

1952 ҫулхи ҫуркуннерен пуҫласа пирӗн республикӑри кашни колхозрах МТС тракторӗсемпе комбайнӗсем ӗҫлемелле. Ҫакӑ вӑл тырпул тухӑҫлӑхне чылай хӑпартма пулӑшӗ, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре ҫӗнӗ ӳсӗмсем тума май парӗ. Анчах хӑшпӗр ҫӗрте ку тарапчченех машинӑна хирӗҫле шухӑшсем пур. Ку ӗнтӗ пӗрлешсе пысӑкланнӑ колхозсен хӑватне машинӑсемсӗр ӳстерме май ҫуккине ӑнланманнинчен килет. Халӗ хуҫалӑхшӑн тӑрӑшман руководительсем ҫеҫ машинӑна хирӗҫле пыма пултараҫҫӗ. Ҫакна манма юрамасть: вак колхозсене пӗрлештерсе пысӑк колхозсем тунине пула эпир шӑпах техникӑна ӑнлӑрах, тухӑҫлӑрах усӑ курма, малта пыракан агрономи наукин кӑтартӑвӗсене пурнӑҫлама, ҫав никӗс ҫинче колхозсен экономикине малалла тӗреклетсе пыма пултаратпӑр.

МТС-сен ӗҫне тӗпрен лайӑхлатма техникӑна алла ҫавӑрса илнӗ кадрсем кирлӗ. Ҫакна шута илсе, кашни машина-трактор станцийӗ валлиех пысӑк квалификациллӗ кадрсем ҫителӗклӗ таран хатӗрлемелле. Ялхуҫалӑх ӗҫӗсем пуҫланиччен трактористсен, комбайнерсен, трактор бригадисен бригадирӗсен, механиксен, шоферсен тата ытти механизаторла кадрсен пысӑк пайне ҫӗнӗрен вӗрентсе хатӗрлемелле, халиччен ӗҫленӗ механизаторсен квалификацине те ӳстермелле.

1952 ҫулта кашни МТС хӑй умӗнче тӑракан задачӑна ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлатӑр тесен, ӗҫре малта пыракансен опычӗпе анлӑн усӑ курмалла. Кӑҫал кашни трактора икӗ сменӑпа йӗркеллӗ ӗҫлеттермелле тӑвас пулать. Ҫакӑн пек тусан кӑна тракторӑн мӗнпур вӑйӗпе усӑ курма май пур. Иртнӗ ҫул Октябрьски, Ҫӗмӗрле, Сӗнтӗрвӑрри, Хӗрлӗ Чутай тата Шупашкар МТС-ӗнче нумай тракторсене пӗрер сменӑпа ӗҫлеттернӗ. Мӗншӗн-ха? Сӑлтавӗ кунта—трактористсем ҫителӗксӗр хатӗрленниче пулнӑ. Октябрьски МТС-ӗнче хӑшпӗр тракторсем ҫинче прицепщиксем ӗҫленӗ. Ҫакӑн пек ҫитменлӗхсем кӑҫал пӗр МТС-ра та пулмалла мар. Машинӑсене ӗҫлеттермесӗр усӑсӑр лартассине татӑклӑн пӗтермелле. Апла пулсан, тракторсене тӗплӗ юсас пулать. Ҫапла тунипе кӑна эпир мӗнпур уй-хир ӗҫӗсене кӗске срокра, пысӑк пахалӑхпа туса ирттерме пултаратпӑр.

Колхозсемпе МТС-сем хушшинчи договорсен пӗлтерӗшне ӳстерни кирлӗ. Договорта илнӗ обязательствӑсене колхоз та, МТС та вӑхӑтра пурнӑҫласа пымалла тӑвас пулать.

Тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерес ӗҫре ҫӗрӗҫ культурине лайӑхлатни кирлӗ услови пулса тӑрать. Пур колхозсенче те малта пыракан агротехникӑна тимлӗн пурнӑҫа кӗртессишӗн кӗрешмелле. Курӑксем акса тумалли уйлӑ пусӑ ҫаврӑнӑшӗсем тӑвас ӗҫе хӑвӑртрах вӗҫлемелле. Нумай ҫул ӳсекен курӑксем ҫителӗклӗ акмасӑр пусӑ ҫаврӑнӑшӗ тӑвасси ҫинчен калаҫни—пуш сӑмах ваклани кӑна пулать. Ҫитес ҫуркунне пур колхозсенче те нумай ҫул ӳсекен курӑксем акмалли плана тултармалла. Клевер акса тунипе пӗрлех люцернӑна тимофеевкӑпа хутӑш акас ӗҫе те анлӑн сарса пымалла. Нумай ҫул хушши ӳсекен курӑксем акса тумалли агротехникӑна тӗпрен лайӑхлатмалла. Ку ӗҫре кӗллӗ тӑпрасене извӗҫлесси ҫине уйрӑмах тимлӗ пӑхмалла. Пирӗн республикӑри сурҫӗрти районсенче уйрӑмах кӗллӗ тӑпрасем. Ҫав тӑпрасем ҫинче ялхуҫалӑх культурисем, пуринчен ытла клеверпа люцерна начар ҫитӗнеҫҫӗ.

Кунпа пӗрлех удобренисемпе туллин усӑ курассине те асра тытмалла. Удобренисене вӑхӑтра хатӗрлемелле, вӗсемпе пӗлсе усӑ курмалла. Тислӗке ячӗшӗн кӑна хире кӑларни пачах пулмалла мар. Минераллӑ удобренисене хуҫасӑрла расходланине хирӗҫ те вӑйлӑн кӗрешмелле.

Пирӗн колхозсем халӗ, МТС-сем техникӑпа пуянланса пынипе усӑ курса, сурхи тата кӗрхи тырӑсене предплужникллӑ плугсемпе тарӑн сухаласа акма май илчӗҫ.

1952 ҫулта колхозсенче мӗнпур культурӑсене сортлӑ вӑрлӑхсемпе акас пулать. Ҫавӑнпа халех кашни колхозӑн пысӑк тухӑҫлӑ вӑрлӑхсем хатӗрлесе хумалла. Кӑҫал республикӑри колхозсенче уй-хир ӗҫӗсене тракторсемпе, комбайнсемпе ытларах тумалла пулать. Ҫавӑнпа вӗсене вӑхӑтра та лайӑх пахалӑхпа юсамалла. Апла пулин те, ку ӗҫе чылай районсенче тивӗҫлипе хакламасҫӗ. Февралӗн 15-мӗшӗ тӗлне тракторсен 56.7 процентне, комбайнсен 24 процентне, кӑларса ӗҫлемелли машинӑсен суррине кӑна юсама ӗлкӗрнӗ. Ку ӗҫ уйрӑмах Калинино, Сӗнтӗрвӑрри, Шӗлеи, Ҫӗрпӳ, Вӑрнар, Тӑвай тата Етӗрне МТС-ӗсенче япӑх пырать. Тракторсене юсанипе пӗрлех горючие сӗрмелли материалсем турттарас ӗҫе те тӗпрен хӑвӑртлатмалла.

Ялхуҫалӑхӗнчи мӗнпур ӗҫсен ӑнӑҫлӑхне МТС-семпе колхозсенчи резервсемпе, ӗҫ ресурсӗсемпе анлӑн усӑ курни татса парать.

Ӗҫлеме пултаракан кашни колхозника обязательнӑй йӗркепе ӗҫе явӑҫтармалла. Кӑҫал ӗҫкунӗсен минимумне тултарман пӗр колхозник та ан пултӑр. Колхозсене ӗҫ дисциплинине пӗрмай ҫирӗплетсе пымалла. Колхоз правленийӗсем кунта пӗрлех ӗҫшӗн хушса тӳлесси ҫинчен те манас пулмасть. Ӗҫшӗн хушса тӳлени колхозри ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетме, ӗҫе тӗрӗс йӗркелеме, производство бригадисене тӗреклетме пулӑшӗ.

Колхозсене пӗрлештерсе пысӑклатни вӗсене пур енлӗн те аталантарса пыма лайӑх майсем пачӗ. Кашни колхоз тырпул акса тунисӗр, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетнисӗр пуҫне хушма хуҫалӑхсене вӑйлӑн аталантарма тивӗҫлӗ. Пирӗн республикӑри колхозсенче нумай тупӑш паракан отраслӗне аталантарма — техникӑллӑ культурӑсем акса тума, ҫавӑн пекех пахча ҫимӗҫ, сад ӗрчетме, хурт-хӑмӑр йышне ӳстерме, строительство материалӗсем тума тата ытти ӗҫсене анлӑн сарса яма пысӑк майсем пур. Кок-сагыз, кантӑр, йӗтӗн, махорка, хӑмла акса тунӑ колхозсене укҫа тупӑшӗсене ӳстерме, ҫапла вара, ӗҫкунӗсем тӑрӑх тырӑсӑр пуҫне укҫа та ытларах валеҫме май парать. 1951 ҫулта, сахалӑк ытла чаплах пулмарӗ пулин те, пирӗн республикӑри колхозсем, государствӑна техникӑллӑ культурӑсем сутса 20 миллион ытла тупӑш курчӗҫ Кӑҫал кашни колхозӑн техникӑллӑ культурӑсем акмалли плана тултарассишӗн кӗрешмелле. Пирӗн республикӑри колхозсенче кур-кӑвакал, кӑркка тата ытти кайӑк-кӑшӑк ӗрчетме майсем пур.

Тата ҫакна та палӑртмалла: ялхуҫалӑхне механизацилес ӗҫ ӳсни пӗре те лаша пӗлтерӗшне чакармасть. Колхозниксен пушшене тивӗҫтерессӗ ҫинчен те пӗр минутлӑха та манма кирлӗ мар. Колхозсенче лайӑх лашасем ҫитӗнтермелле.

Ялхуҫалӑхӗн хальхи тапхӑрти аталанӑвӗнче—колхозсем организаципе хуҫалӑх енчен тӗрекленсе пынӑ, машина-трактор станцийӗсем ҫӗнӗ техникӑпа пуянланнӑ вӑхӑтра агротехникӑна тата зоотехникӑна массӑллӑн вӗренни пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Колхозниксен ҫав шкулсенче вӗренес кӑмӑлӗ питӗ пысӑк. Колхозсен правленийӗсемпе районсенчи ҫӗрес пайӗсен агрозоотехника курсӗсенче занятисене йӗркеллӗ ирттерсе тӑмалла. Малта пыракансен ӗҫ опытне сарасси пысӑк вырӑн йышӑнмалла. Колхозӑ ялти вӗрсе тӑракан пурнӑҫ кунран-кун ялхуҫалӑхне малалла аталантарма ҫӗнӗ пусару, ҫӗнӗ юхӑм сурата-сурӑта кӑларать. Пирӗн республикӑра халӗ механизаторсен ӑмӑртӑвӗ пуҫланчӗ. Вырӑнти партипе совет тата ялхуҫалӑх органӗсен ҫав патриотла кашни пусарӑва, юхӑма вӑхӑтра асӑрхаса, вӗсене колхозниксен анлӑ массисем хушшинче сарса пырас пулать. Ҫак никӗс ҫинче колхозсемпе МТС-сене ертсе пырас ӗҫе сӳлӗ пусӑма ҫӗклемелле, колхозсемпе МТС-сене 1952 ҫулти задачӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртме пулӑшмалла.

Колхозлӑ ял ӗҫченӗсем 1952 ҫулта хӑйсен умӗнче тӑракан задачӑсене пурнӑҫлассишӗн мӗнпур вӑя хурса ӗҫлӗҫ, ӑна ҫирӗппӗнех шанса тӑма пулать.

Г. МАРТЫНОВ,
Чӑваш АССР Ялхуҫалӑх министрӗ.

Февралӗн 15-мӗшӗ

Вӑрман хатӗрлемелли плана тултармалли стахановла уйӑхлӑх

Мартӑн 15-мӗшӗ

Ҫӗмӗрле вӑрманпромхозӗн Речной вӑрман пунктӗнче электричествӑпа ӗҫлекен пӑчкӑ моторисчӗ Е. И. Шапкин юлташпа унӑн помощникӗ С. Ф. Кирилин юлташ производство заданине кашни уйӑхрах ирттерсе тултараҫҫӗ.
ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Е. И. Шапкин (сылтӑмри) тата С. Ф. Кирилин юлташсем касса йӑвантарнӑ юман патӗнче.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Вӑрманта ӗҫлекенсем сахал

ҪӖМӖРЛЕ, февралӗн 18-мӗшӗ. (Телефонпа). Вӑрманпромхоз коллективӗ уйӑхлӑха хутшӑнӗ. Рабочисем, колхозниксем, инженерсемпе техниксем Сталин юлташ патне янӑ ҫырура йышӑннӑ обязательствӑна чыслӑ пурнӑҫлассишӗн вӑл шеллемесӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Стахановла уйӑхлӑх пуҫланиччен вӑрманпромхоз куллен вӑтам шутпа 800-шер кубометр йывӑҫ турттарса кӑларатчӗ. Февралӗн 15-мӗшӗнче 837 кубометр, февралӗн 16-мӗшӗнче—1.200 кубометр турттарса кӑларнӑ. Калрти чылай рабочисем ӗҫ нормине ирттерсе тултараҫҫӗ.

Вӑрманпромхоз ӑнӑҫлӑ ӗҫлесси ун ҫумне йывӑҫ хатӗрлеме ҫирӗплетнӗ районсенчен те сахал мар килет. Ҫӗмӗрле районӗнчи партипе Совет организацийӗсем вӑрман хатӗрлемелли сезонти плана пӗтӗмӗшпе мартӑн 1-мӗшӗ тӗлне тултарма пулчӗҫ. Ҫак задачӑна вӗсем пурнӑҫлаҫҫӗ, кун пирки иккӗленмелли ҫук. Чылай колхозсен членӗсем вӑрманта хастарлӑ ӗҫлеҫҫӗ.

Ҫав вӑхӑтрах Сӗнтӗр, Етӗрне, Хӗрлӗ Чутай тата Советски райсовет исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсем вӑрман хатӗрлес енӗпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ пулмалла. Асӑннӑ районсенчен вӑрманта ӗҫлекенсем ҫукпа пӗрех. Хӗрлӗ Чутай районӗнчен пурӗ те 2 сын ҫуран, 8 сын лавпа ӗҫлеҫҫӗ. Сӗнтӗрпе Советски районӗсенчен йывӑҫ касса хатӗрлеме пӗр сын та килмен.

Ӗҫ вӑйӗ сахаллипе вӑрманпромхоз пӑравуссемпе тата автомашинӑсемпе туллин усӑ кураймасть, йывӑҫ ӑсатмалли заданине тултараймасть. Февраль уйӑхӗнче 35 пин фестметр турттарса кӑлармалла пулсан, февралӗн 15-мӗшӗ тӗлне 13,5 пин кубометр ҫеҫ турттарса кӑларнӑ.

А. РОЖКОВ,
Ҫӗмӗрле вӑрманпромхоз директорӗ.

Улшӑну кирлӗ

Сӗнтӗрвӑрри районӗ вӑрман хатӗрлевӗнче юлса пырать. Февралӗн 15-мӗшӗ тӗлне район «Чӑвашвӑрман» трест енӗпе йывӑҫ касмалли плана 72,4 процент, каснӑ йывӑҫа ҫул хӗррине илсе тухмалли плана—66,9 процент, турттарса кӑлармалли плана 42,2 процент ҫеҫ тултарнӑ. Ҫапла район Тӑван ҫӗршыв умӗнчи пысӑк парӑма кӗнӗ.

График тӑрӑх Приволжски вӑрманпромхозра куллен 220 лав, 192 сын ҫуран ӗҫлемелле. Февралӗн 10-мӗшӗпе 15-мӗшӗ хушшинче 40—50 лав, 30—32 сын ҫуран ӗҫленӗ.

Вӑрман хатӗрлес ӗҫе вӑйлатас тесе, райсовет исполкомӗ решенисем нумай йышӑннӑ. Анчах ӗҫре улшӑну ҫук, мӗншӗн тесен ял Совечӗсемпе колхоз правленийӗсем ҫав решенисене мӗнле пурнӑҫланине сахал тӗрӗсленӗ.

Иртнӗ ҫулхи ноябрӗн 13-мӗшӗнче райсовет исполкомӗ Упакасси ял Совечӗ государство заданине мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен сӳтсе явнӑ. Исполком ял Совет исполкомӗн председательне Иванов юлташа асӑрхаттарнӑ, ӗҫре татӑклӑ улшӑну тума хушнӑ. Ку решени хут ҫинче кӑна юлнӑ. Ял Советне кӗрекен Ленин ячӗпе тӑракан колхоз февралӗн 10-мӗшӗ тӗлне йывӑҫ касса хатӗрлемелли плана 41 процент, ҫул хӗррине илсе тухмалли плана 24,5 процент ҫеҫ тултарнӑ 370 кубометр йывӑҫ турттарса кӑлармалла пулсан, колхоз пӗр йывӑҫ та турттарман. Мичурин ячӗпе тӑракан, «Правда» тата ытти колхозсем пирки йышӑннӑ решенисем те пурнӑҫа кӗреймесӗрех юлнӑ. Стахановла уйӑхлӑх пуҫланнӑранпа та районта улшӑну пулман-ха.

Сталин юлташ патне янӑ ҫырура йышӑннӑ обязательствӑна чыслӑн пурнӑҫлама колхозниксене большевикла мобилизацилемелле. Ял Советсемпе колхоз руководителӗсен ответлӑхне ӳстерес пулать.

Н. ТИТОВ.

Механизаторсем вӗрентсе хатӗрлеҫҫӗ

Сӗнтӗрвӑрри вӑрман техникумӗ ҫумӗнче РСФСР-ти вӑрман промышленноҫӗ валли трактористь-трелевщиксем, бульдозеристсем, грейдерсемпе мастерсем вӗрентсе хатӗрлесси, электростанци механикӗсемпе хӑрушсӑрлӑх техникӗ енӗпе ӗҫлекен инженерсен квалификацине ӳстерекен курс пур. Ҫак курсра, хамӑр республикӑран кӑна мар, Тутар республикинчен, Иваново, Смоленск, Пенза, Воронеж облаҫӗсемпе Ставрополь крайӗнчен тата ытти ҫӗртен те килсе вӗренеҫҫӗ. «Куйбышевлес» трест валли тракторист-трелевщиксем вӗрентсе хатӗрлеме ятарласа 30 ҫынтан ушкӑн тунӑ. Кӑҫалхи план тӑрӑх курсра пурӗ 515 ҫын вӗрентмелле.

Курсантсем валли вӗренме тата пурӑнма лайӑх условисем туса панӑ. Вӗсем, механизмсене тата технологи процесне вӗреннисӗр пуҫне, математика, вырӑс чӗлхи, физика, ВКП(б) историне вӗренеҫҫӗ, практикӑллӑ занятисене пулаҫҫӗ. Курсӑн бульдозер, КТ-12 тракторсем, лебедкӑсем, куҫса ҫӳрекен электростанцисем, газогенераторлӑ станцисем тата ытти механизмсем те пур.

1951 ҫулхи июнь уйӑхӗнче курсра республикӑри вӑрманпромхоз директорӗсем хӑйсен пӗлӗвне ӳстернӗ.

Курс руководителӗсем курсран вӗренсе тухнӑ механизаторсемпе тата вӑрманпромхоз директорӗсемпе тачӑ ҫыхӑну тытаҫҫӗ. Предприятисенче курсран вӗренсе тухнӑ работниксем ӗҫре пысӑк ӳсӗмсем кӑтартни, ҫӗнӗ техникӑпа лайӑх усӑ курма вӗренсе ҫитни ҫинчен ҫырса пӗлтереҫҫӗ.

Аҫтышево вӑрманпромхозӗнче ӗҫлекен паллӑ тракторист-трелевщик Н. Вильдяев юлташ ҫак курсран вӗренсе тухнӑ.

«Куйбышевлес» трест курс руководителӗсене Сӗнтӗрвӑррипе вӗреннӗ тракторист-трелевщик А. Климцов юлташ профессисем тӑрӑх пыракан социализмлӑ ӑмӑртура пӗррӗмӗш вырӑна тухни ҫинчен пӗлтернӗ.

Курс руководителӗсем патне Тутар республикинчен, Иваново облаҫӗнчен, хамӑр республикӑри вӑрманпромхозсенчен, курсран вӗренсе тухнӑ механизаторсен патриотла ӗҫне палӑртса, ҫырусем килсе тӑраҫҫӗ.

Вӑрман хатӗрлевӗнче малта пыракансене памалли премисем.

СССР Вӑрман промышленность министерстви «Чӑвашвӑрман» трестне пирӗн республикӑри районсемпе колхозсенчи вӑрман хатӗрлевӗнче уйрӑмах тӑрӑшса ӗҫлекен работниксене премилеме хаклӑ япаласем нумай уйӑрса панӑ.

Вӑрман хатӗрлевӗнче малта пыракансене премилеме уйӑрса панӑ япаласен шутӗнче: 14 мотоцикл, ҫӗвӗ ҫӗлемелли 27 машина, 27 радиоприемник, сунара ҫӳремелли 54 пӑшал, 54 велосипед, 54 патефон, алла ҫыхмалли сехетсем тата ытти япаласем те нумай.

Патрекел клубӗнче

Патрекелӗнчи клуб (Елчӗк районӗ) — малта пыракан клубсенчен пӗри. Кунта лекцисемпе докладсем, калаҫусем час-часах ирттереҫҫӗ, концертсемпе постановкӑсем пулаҫҫӗ, кино кӑтартаҫҫӗ.

Клуб ҫумӗнче лекторсен пӗрлешӗвӗ, тӗрлӗ кружоксем, физкультурӑпа спорт коллективӗсем ӗҫлеҫҫӗ. Лекторсен пӗрлешӗвӗнче 17 ҫын. Ӑна ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулӑн вӗренӳ пайӗн заведующийӗ А. Енейкин юлташ ертсе пырать. Лекторсен шутӗнче—учительсемсӗр пуҫне Н. Миловидова М. Бабайкина медработниксем, Г. Кудрявцев агроном, Ф. Иванов садовод-мичуринец, В. Скворцов ветфельдшер тата ытти юлташсем те.

Пӗрлештерсе пысӑкланнӑ Свердлов ячӗпе тӑракан колхозра пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илнӗшӗн тӑхӑр колхозника правительство орденсемпе медальсем парса наградӑланӑ. Лекторсен пӗрлешӗвӗ ҫак юлташсене лекцисемпе докладсем тата калаҫусем ирттерес ӗҫе хутшӑнтарать.

Лекторсен пӗрлешӗвне тӑватӑ секцие уйӑрнӑ. Ялхуҫалӑх секцине Н. Можаев юлташ, обществӑллӑ тата политикӑллӑ секцине А. Пушков юлташ, наукӑпа сутҫанталӑка вӗренмелли секцине ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул директорӗ Б. Романов юлташ, медицинӑпа санитари секцине Ф. Блинова врач ертсе пыраҫҫӗ.

Лекторӑн темӑне секцин икӗ членӗ пӑхса тухать. Унтан лекцие лекторсен пӗрлешӗвӗнче вулаcа тухаҫҫӗ. Лекторсем хӑйсен шухӑш-кӑмӑлӗсене калаcа параҫҫӗ, лекцин лайӑх енӗсене тата ҫитменлӗхӗсене палӑртаҫҫӗ.

Клуб ҫумӗнчи лекторсен пӗрлешӗвӗн лекторӗ М. Воронцов юлташ «Ҫамрӑксене физически воспитани парасси—коммунистла воспитани парас ӗҫӗн уйрӑлми пайӗ» темӑпа лекци текстне хатӗрленӗ. Ҫак лекци текстне обществӑллӑ тата политикӑллӑ секцире сӳтсе явнӑ тата лекторсен пӗрлешӗвӗнче вулаcа тухнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн Воронцов юлташ хӑйӗн лекцине колхозниксем хушшинче вулама тытӑннӑ. Ялти медпунктӑн заведующийӗ Н. Миловидов юлташ «Сын ӗмӗрне вӑрӑмлатасси ҫинчен» лекци хатӗрленӗ. Лекторсен пӗрлешӗвӗнче сӳтсе явнӑ чухне унӑн паха енӗсене кӑтартнипе пӗрлех ҫитменлӗхсене те палӑртнӑ. Лектор чӑваш халӑхӗ хушшинче нумай пурӑнакан ҫынсем ҫинчен сахал каланине палӑртнӑ тата кун пирки «Чӑваш Коммуни» хаҫатра Харьковри А. М. Горький ячӗпе тӑракан государство университечӗн биологи тӗлӗшпе ӗҫлекен наукӑпа тӗпчев институчӗн сотрудникӗ Шафиро юлташ ҫырнӑ статьяпа усӑ курма сӗннӗ.

Патрекелӗнчи клубӑн тепӗр лайӑх енӗ вӑл ҫакӑ пулса тӑрать: лекторсем Патрекелӗнчи клубра кӑна мар, Свердлов ячӗпе тӑракан колхоза кӗрекен ытти икӗ ял клубӗсенче те лекцисем вулаҫҫӗ. Сӑмахран: «Тӗн йӑлисемпе уявӗсем пуҫланса кайни тата вӗсен сиенӗ ҫинчен» А. Пушков учитель Патрекел, Акчел тата Тимеш ялӗсенчи клубсенче лекци вуланӑ.

Клубра кашни эрнерех пӗр лекци пулать. Иртнӗ ҫулӑн юлашки кварталӗнче пурӗ 13 темӑпа лекци вулаcа панӑ. Вӗсен шутӗнче: «Коммунизмӑн аслӑ стройкисем», «Тӗнчери халӑхсем миршӗн кӗрешни», «Пурнӑҫпа вилӗм», «Тӗнчери тӑру-тӑру», «Совет суҫӗ—тӗнчери чи демократиллӗ суд», «Ачасене ӗҫре воспитани парасси», «Ҫӗр ҫинче пурнӑҫ пуҫланса кайни», «Ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен опычӗ», «Мичурин вӗрентӗвӗ» «Совет патриотизмӗ» тата ытти темӑсем те. Лекци итлеме колхозниксем йышлӑн пухӑнаҫҫӗ. Вӗсем нумай ыйтусем параҫҫӗ Лекци хыҫҫӑн яланах концерт, спектакль е кино пулать.

Клуб ҫумӗнче хорпа драма кружокӗсем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Хор кружокне 15 ҫул ытла С. Скворцов колхозник ертсе пынӑ. Вӑл район центрне ӗҫлеме куҫнӑ хыҫҫӑн, кружок руководителӗсӗр тӑрса юлнӑ, саланса кайма тытӑннӑ. Клуб заведующийӗ М. Воронцов юлташ учительсем пулӑшнипе нота вӗренме тытӑннӑ, хора хӑй ертсе пыма пуҫланӑ. Хор репертуарӗнче вырӑс тата чӑваш композиторӗсен юррисемпе халӑх юррисем пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Халӗ пыракан смотрта ҫак хор районта малти вырӑнсенчен пӗрне йышӑннӑ.

Драма кружокӗ те кашни уйӑхрах ҫӗнӗ спектакль лартса парать. Хорпа драма кружокӗсем Свердлов ячӗпе тӑракан колхоза кӗрекен ялсен клубӗсенче час-часах постановкӑсемпе концертсем параҫҫӗ. Халӗ кунта «Парнеллӗ туй» пьесӑна лартса пама хатӗрленеҫҫӗ. Клубра политикӑллӑ кружоксем тата агрозоотехника курсӗ ӗҫлет.

Патрекелӗнчи клуб оборонӑллӑ-массӑллӑ тата физкультурӑпа спорт ӗҫӗсене лайӑх туса пырать. Иртнӗ ҫулсенче кунта шоферсен курсӗнчен 10 ҫын вӗренсе тухнӑ. Радиотехникӑна вӗренмелли кружок ӗҫленӗ. Халӗ клубра мотоциклпа ҫӳреме вӗренмелли кружок ӗҫлет. Унта 23 ҫын вӗренет. Пурӗ 8 занятии ирттернӗ. Шоферсен курсне кӑҫал та организациленӗ, унта 30 ҫын ҫӳрет. Ҫак ӗҫсене вӗренме колхозӑн мотоцикл, автомашина, моторсем пурри нумай пулӑшать. Нагляднӑй пособисемпе литература ҫителӗклӗ.

Патрекелӗнчи комсомолецсемпе ҫамрӑксем Досааф организацийӗнче йышлӑн тӑраҫҫӗ. ГТО тата БГТО значокӗсем илнисем кунта ҫӗр ҫын ытла. Пӑшалтан тӗл перекен разрядниксем те вунӑшарӑн шутланаҫҫӗ. Клуб йӗлтӗрпе ҫӳрекенсен, пӑшалтан тӗл перекенсен ӑмӑртӑвӗсене час-часах ирттерет, походсем организацилет. Ҫар техники, физкультурӑпа спорт ҫинчен клубра яланах лекцисемпе докладсем тата калаҫусем ирттереҫҫӗ.

Клуб библиотекинче виҫӗ пин ытла кӗнеке. Библиотека колхоз бригадисем валли ҫӳрекен библиотекӑсем тунӑ. Кунта кӗнеке-хаҫатсене ушкӑнпа пухӑнса сасӑпа вулас ӗҫе йӗркеленӗ. Библиотекӑран вулама кӗнеке илсе вулакансем 400 ҫын ытла шутланать. Клубпа библиотека тӗрлӗ хаҫат-журналсем нумай ҫыранса илеҫҫӗ. Вӗсене вулама кашни кунах клуба колхозниксем йышлӑн пухӑнаҫҫӗ.

Клуб ҫумӗнче 1923 ҫултанпа стена хаҫачӗ тухса тӑрать. Ҫак вӑхӑтра вӑл пурӗ 781 номер тухнӑ. Стена хаҫатне колхозниксем активлӑн ҫырса тӑраҫҫӗ. Колхоз бригадисенче боевой листоксем тухаҫҫӗ.

О. ЯСТРЕБОВ.

Халăх демократи çĕршывĕсенче

*

Совет Çарĕн кунне уявлама хатĕрленеççĕ

ВАРШАВА, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăри общественность Совет Çарĕ 34 çул тултарнине уявлама хатĕрленет. Польшăпа Совет Союзĕн туслăх обществин тĕп правленийĕ Совет Çарĕ çинчен тĕрлĕ сăрсемпе илемлетнĕ пысăк плакат пичетлесе кăларнă. Унăн тиражĕ пысăк. Ăна хуласемпе ялсене салатнă. «Калаçу ирттерекенĕн блокночĕ» пысăк тиражпа пичетленĕ. Унта В. И. Ленинпа И. В. Сталин организациленĕ Совет Çарĕ çамрăк Совет республикине интервентсенчен сыхласа хăварса пит ĕ пысăк ĕç туни, Совет Çарĕн вăй-хăвачĕ ўссе пыни, вăл Европăри халăхсене гитлеровецсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларса пĕтĕм тĕнче историйĕнче чаплă ĕç туни çинчен, Совет Çарĕ пĕтĕм тĕнчери мир тĕрекĕ пулса тăни çинчен çырнă материалсем нумай.

Материалсенче совет çар наукине туса хатĕрлес ĕçре Сталин юлташăн полководецла генийĕ уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăнине, совет çар науки вĕрентнĕ тăрăх вăрçăра çапăçни гитлерла çарсене аркатса тăкма май панине палăртнă.

Предприятисенче, учрежденисенче тата клубсенче пур çĕрте те Польшăпа Совет Союзĕн туслăх обществин кружокĕсем фотовитринăсем организацилеççĕ, стена хаçачĕсем кăлараççĕ, Совет Çарĕ çинчен калаçусем ирттерме хатĕрленеççĕ.

Ялсемпе хуласенчи халăх Польшăна гитлерла оккупантсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларассишĕн кĕрешсе вилнĕ совет воинĕсен вилтăприсене юсать.

Февралĕн 23-мĕшĕнче Варшавăра, воеводствăсемпе уездсен центрĕсенче савăнăçлă ларусем пулаççĕ.

СОФИЯ, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири ĕçсыннисем çĕршыва фашистла пусмăртан ирĕке кăларнă Совет Çарĕ 34 çул тултарнине чаплă уявлама хатĕрленеççĕ. Фабрикăсемпе заводсенче, çĕрĕç кооперативĕсенче çак мухтавлă куна çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн социализмла ăмăртса ĕçлесси анлă саралнă. Димитров хули—çĕршыври çĕр кăмрăкĕ кăлармалли тĕп бассейн центрĕ. Димитров хулинчи шахтерсем Совет Çарĕ 34 çул тултарнă ятпа çĕр кăмрăкĕ нумайрах кăларассишĕн хытă тăрăшса ĕçлеççĕ. Ăмăртса ĕçленĕ кунсенче горнякĕсем çĕнĕрен рационализаторла сĕнÿсем чылай панă, çав сĕнÿсем ĕç тухăçлăхне ўстерме пулăшаççĕ. Георгий Хицов рабочи çĕр кăмрăкĕ тиенĕ вагонсене пушатас ĕçе механизациленĕ, вăл халĕ çĕнĕрен паха сĕнÿ панă.

Совет Çарĕн кунне тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн ăмăртса ĕçлесси Софийăри Георгий Димитров ячĕпе тăракан пăравуссемпе вагонсем тăвакан заводра, Сталин хулинчи суднăсем тăвакан верфьре тата ытти промышленность предприятисенче те анлă саралнă. Ăмăртса ĕçленипе çав предприятисенче М. Левченко тата Г. Муханов пуçарнă стахановла меслетпе ĕçлекенсен йышĕ чылай пысăкланнă, продукцин хăйне ларакан хакне чакарнă.

Венгрипе Совет Союзĕ договор тунăранпа

4 çул тултарчĕ

Кăçалхи февралĕн 18-мĕшĕнче Венгри халăхĕ Венгрипе Совет Союзĕ пĕр-перинпе туслă, килĕштерсе ĕçлесе пурăнасси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен договор тунăранпа 4 çул тултарнине паллă турĕ.

Çак чаплă уяв çинчен тата Венгрипе Совет Союзĕн туслăх уйăхлăхĕ пуçланасси çинчен хаçатсем умстатьясем пичетлесе кăларнă.

«Венгрипе Совет Союзĕн туслăхĕ пуллах, 1948 çулхи февралĕн 18-мĕшĕнче мар, унтан нумай маларах пуçланнă,—тесе çырать «Сабад неп» хаçат.—Венгри халăхĕн чи лайăх представителĕсем Октябрьти Социализмлă Аслă революци çĕнтернĕ жунранпах Совет çĕршывне хăйсене малалла каймалли çула кăтартса паракан çăлтăр тесе шутланă. Совет халăхĕ, Совет правительстви яланах Венгри халăхне кăмăлланине, унпа туслă шухăш-кăмăллă пулнине, ăна пулăшма хатĕр пулнине кăтартса панă. Анчах договор туса алă пусни пирĕн халăхсен туслăхĕнче уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ самант пулчĕ...

Венгрипе совет халăхĕсен туслăхĕ, Венгрипе Совет Союзĕн договорĕ—Венгри нацийĕн никама пăханманлăхĕн, Венгри халăхĕ ирĕклĕхĕн пысăк шанчăкĕ... Венгрипе совет халăхĕн туслăхĕ, Венгрипе Совет Союзĕн договорĕ пирĕн çĕршыври социализм строительствин хăватлă майĕ пулса тăраççĕ.

Пирĕн халăх Совет Союзне, Сталин юлташа чун-чĕререн тав тăвать, тесе çырать «Непсава» хаçат. Пирĕн ирĕклĕх ўссе çирĕпленнĕ тăпрана Совет Союзĕн вуншар пин геройĕсен хаклă юнĕпе шăварнă. Совет салтакĕсем пире ирĕклĕх, çăкăр, пурнăç пачĕç. Хортив фашистла режимĕ Совет Союзĕ çинчен тем тĕрлĕ ирсĕр суя элек сарчĕ пулсан та, ăна Совет Çарĕ Венгри халăхне ирĕке кăларни, чăн-чăн пурнăç пĕтĕмпех сирсе ячĕ. Венгри халăхĕ совет çынни пĕтĕм чаппе. ирĕклĕхпе мир кўревен çынăн партăтарлă сăн-сăпатне курса пĕлчĕ. Ирĕке тухнă малтанхи кунранпах эпир Сталин юлташ тата совет халăхĕ пире пулăшса пынине туйса тăратпăр.

Венгрипе совет халăхĕсен туслăхĕ пире ытти халăхсене юратма, чăн-чăн интернационализм шухăшлĕ пулма, тăван çĕршыва хĕрÿллĕ патриочĕсем пулма вĕрентет Совет çыннисем ытти халăхсен ирĕклĕхĕшĕн мĕнле кĕрешнĕ тата халĕ мĕнле кĕрешеççĕ. Венгрипе совет халăхĕн туслăхĕ пире миршĕн çавăн пекех çине тăрса кĕрешме вĕрентет. (ТАСС).

Монголи Халăх Республикинче Монголипе

Совет Союзĕн туслăх уйăхлăхне ирттерме

хатĕрленеççĕ

УЛАН-БАТОР, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 20-мĕшĕнчен Монголи Халăх Республикинче Монголипе Совет Союзĕн туслăх уйăхлăхĕ пуçланать. «Унэн» хаçат Монголи халăхĕ çак уйăхлăха ирттерме тимлĕ хатĕрленни çинчен пĕлтерет.

Монголири ССР Союзĕпе культурăллă çыхăну тытас тĕлĕшпе ĕçлекен обществăн пур аймаксенчи уйрăмсенче те совет халăхĕ мирлĕ ĕçре тунă пысăк çитĕнÿсемпе паллаштарма выставкăсемпе фотовитринăсем организацилеççĕ. Республикăри предприятисемпе учрежденисенче те, çавăн пек фотовыставкăсем тăваççĕ.

Монголири ССР Союзĕпе культурăллă çыхăнусем тытас тĕлĕшпе ĕçлекен обществăн уйрăмĕсем пур çĕрте те Совет Союзĕ çинчен лекцисемпе калаçусем ирттерме палăртнă. Хĕрлĕ кĕтессемпе кĕрвĕ юртăсенче «Унэн» хаçатăн «Совет Союзĕ тăрăх» ятлă пайĕнче пичетленекен материалсене сасăпа вулассине организацилеççĕ. Центрти тата аймаксенчи радиостанцисем кашни кун Совет Союзĕ çинчен ятарласа передачăсем параççĕ.

Монголи Халăх Республикинчи художникĕсем уйăхлăх пуçланнă тĕле Монголипе совет халăхĕсен çирĕп туслăхĕ çинчен плакатсем хатĕрлеççĕ.

Уйăхлăх пуçланас умĕн Монголири ССР Союзĕпе культурăллă çыхăнусем тытас тĕлĕшпе ĕçлекен общество членĕсен йышĕ ўссе пырать.

Китайри рабочисен ĕçри çитĕнĕвĕсем

ПЕКИН, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Китай Халăх Республикинче производствăри йĕркесене урăхлатса çĕнетессишĕн, Совет Союзĕнчи малта пыракан опытпа усă курассишĕн тата производство технологине лайăхлатассишĕн тăрăшакансен юхăмĕ анлă саралнă.

«Гуанминжибао» хаçат паян çакăн çинчен пĕлтерет: государствăн Тяньцзинри тата Пекинри хут фабрикисенче, Совет Союзĕнче малта пыракансен меслечĕсемпе ĕçленипе пула, хут тăвас ĕçĕн çĕнĕ технологийĕ тăрăх ĕçлеме вĕренсе çитнĕ. Ку вăл хут чылай нумайрах туса кăларма тата унăн хăйне ларакан хакне йўнетме май панă.

«Цзюньчжунжибао» хаçат продукци нумайрах туса кăларассишĕн тата перекетлĕхшĕн кĕрешекенсен юхăмĕ сарални çинчен хыпар пичетленĕ. Ланьчжоу хулинчи автомобиль пайĕсем тăвакан заводра производствăри çамрăк отличник Ван Гуй-лян, инженерсемпе тата техниксемпе пĕрле, автомобиль карбюраторне пĕтĕмпех Китайри чĕртаварсем туса хатĕрленĕ. Çав карбюраторăн хакĕ халиччен ют çĕршывсенчен кўрсе пынă карбюраторсен хакĕнчен тăватă хут çурă йўнĕрех. Ван Гуй-лян меслечĕпе карбюраторсем туса хатĕрлени завода карбюраторсем нумай туса кăларма, вĕсепе пĕтĕм Çурçĕр-Хĕвеланăç Китай валли çителĕклĕ хатĕрлеме май парать.

Болгарире техника кадрĕсем хатĕрлеççĕ

СОФИЯ, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС) Болгари халăх хуçалăхĕ вăйлă ўссе пынă май промышленноçпа ялхуçалăхĕ валли техникăна пĕлекен кадрсем хатĕрлеме тăрăшаççĕ Кăçал çĕршыври техникумсемпе техника училищисем квалификациллĕ специалистсем 14 пин çынна ях ăн вĕрентсе хатĕрлеççĕ. Экономика училищисем кăна кăçал 3 пин специалист вĕрентсе кăлараççĕ. Вĕсен виççĕмĕш пайне çĕр-ĕç кооперативĕсен хуçалăхĕсенче, государствăн ялти çĕр-ĕç хуçалăхĕсенче, машинăпа трактор станцийĕсенче ĕçлеме яраççĕ. Комбайнерсем вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе те нумай ĕçлеççĕ. Кăçал комбайнерсен йышĕ висĕ хута яхăн ўсет.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнай командованийĕ февралĕн 18-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Фронтсенче уйрăмах паллă улшăну пулман. Уйрăм участоксенче çарсем пĕр-пĕрне хирĕç тупăсемпе тата пулеметсемпе пенĕ.

Паян пирĕн çарсен зенитнай артиллерийĕ тăшманăн 5 самолетне персе ўкернĕ. çав самолетсем уиччен, ытти самолетсемпе пĕрле, Вонсан, Нампхо тата Сукчхонь районĕсене тапăннă пулнă.

Тунисри ĕçсем

ПАРИЖ, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Францин колонири влаçĕсем Тунис халăхне хĕсĕрлеме çаплах чарăнман. «Юманите» хаçат Франци полицийĕ Кайруан, Гафса, Сфакс, Габес, Сиди-Бу-Зид хулисенче тата ытти çĕрте те нумай çынсене арестлени çинчен пĕлтерет.

«Либерасьон» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Франци колонизаторĕсем демократиллĕ хаçатсене хирĕç мерăсем йышăнма тытăннă. Вĕсем Франци влаçĕсен Тунисри юнлă преступленийĕсене тăрă шыв çине кăларакан хаçатсене сапма тата кăларса тăма чараççĕ. Çапла, Тунис территорийĕнче «Либерасьон» хаçата сутма чарнă. Араб чĕлхипе тухакан «Эс-сабах» хаçата кăларса тăма влаçсем хут пама чарнă, çавна пула хаçат тухмасть.

Влаçсем хытă хĕсĕрлеççĕ пулин те, Тунисри патриотсем çĕршыв никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешме чарăнмаççĕ. «Либерасьон» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Тунис патриочĕсем Сус хулипе Сбейтла хулисем хушшинчи чугун çул çинче пĕр поезда аркатнă. Сфакспа Гафса хулисем хушшинчи пĕр кĕпере çĕмĕрнĕ.

Франци влаçĕсем Тунис халăхне хĕсĕрлеççĕ

ПАРИЖ, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Суар-димаш» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Франци çар чаçĕсемпе полици Тунис халăхне çаплах хĕсĕрлеççĕ. Вĕсем уйрăмах Бизерта, Мокнин тата ытти хулисенчи халăха хытă хĕсĕрлеме тытăннă. Çав хуласенчи чылай çынсене тытса хупнă.

Тунис хулине паллă журналистка, Францири демократиллĕ «Фам франсез» журнал редакторĕ Элиза Фрейс пынă пулнă. Ăна Франци генеральнай резиденчĕн канцелярийĕ приказ панипе арестленĕ. Кун пирки Тунисри хĕрарăмсен союзĕн делегацийĕ генеральнай резидент канцелярине пынă. Франци журналисчĕсене ирĕке кăларма ыйтнă. Франци колонири влаçĕсем Тунисра çавăн пек закона ĕç тунине хирĕç Парижра пĕтĕм çĕршыври журналистсен профсоюзĕ протестленĕ.

Франции генеральнай резиденчĕн канцелярийĕ приказ панă тăрăх Тунис территорийĕнче «Юманите» тата «Се суар» ятлă демократиллĕ хаçатсене тата араб чĕлхипе тухакан «Тунис» хаçата сарма чарни çинчен «Суар-димаш» хаçат пĕлтерет.

Иранри лару-тăру пирки

ТЕГЕРАН, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Парс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Иран министрсен совечĕн председателĕ сумĕнче статс-секретарь пулса ĕçленĕ, Тегеран хулинчен меджлис депутатне суйланнă Фатемие вĕлерме тапăнни Иранри халăха хытă тарăхтарнă. Кун пирки пур çĕрте те хадăх тарăхать. Тĕрлĕ партисемпе ушкăнсен хаçачĕсем пурте правительствăран политикăллă деятельсене вĕлерессине чарса лартма ыйтаççĕ. Çавăн пек вĕлерни нефть пирки пысăк калаçусем пынă вăхăтра тата меджлисĕн çĕнĕ созывĕн сессине уçалас умĕн Иран пошлине хавшатма кăна пултарать, тесе çыраççĕ.

Хаçатсем Фатемие вĕлерме тапăнни вăл нумай пулмасть Забол хули районĕнче (Иранăн кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи пайĕ) пулса иртнĕ юнлă ĕçсемпе тачă çыхăнса тăнине палăртаççĕ. «Хăшпĕр çынсен ушкăнĕсем нации правительствине сиенлес шутпа юриех пăлхавсем кăларма тăрăшаççĕ», тесе вывод тăваççĕ.

АНГЛИРИ РАБОЧИСЕМ ХАЙСЕН ПРАВИСЕНЕ ХÿТĔЛЕÇÇĔ

ЛОНДОН, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Англири хаçатсем çакăн çинчен пĕлтереççĕ: Йоркшир, Дарем тата Нортумберленд графствисенче ĕçлекен пăравус машинисчĕсемпе кочегарсен пĕрлештерĕ профсоюзĕнче тăракан 4 пин çын уйăрнă делегатсем резолюци йышăннă, унта вĕсем: финанс министрĕ Батлер тунă план тăрăх сывлăха сыхлас ĕç валли памалли укçан хисепне чакарсан, пĕтĕмĕшпе забастовка пуçласси çинчен пĕлтермелле, тесе çырнă.

Йорк хулинче (Йоркшир графстви) пăравус машинисчĕсемпе кочегарсен пĕрлештерĕ профсоюзĕн округри совечĕ пĕр шухăшлă пулса йышăннă резолюцире: «Батлер социальнай обеспечени çинчен калаван закона пăрахăçлама шутланă пирки эпир шикленетпĕр.. Эпир пирĕн профсоюзăн исполкомĕнчен çак ыйтăва пăхса тухма тата Британири Ĕç конфедерацийĕн генеральнай совечне, Батлер хăй тума шутланине пурнăçлама тытăнсан, пĕтĕмĕшле забастовка пуçламалли çинчен пĕлтерме ыйтатпăр», тенĕ.

СШАваскасах вăрçа хатĕрленнине хирĕç

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Сенатăн хĕçпăшаллă вăйсем енĕпе ĕçлекен комиссийĕнче правительство «пурне те çар ĕçне вĕрентмелли программа» текенскерне (пурте обязательнай йĕркепе çар службинче пулмалли закон.—Ред.) йышăнтарма тăратнă сĕнĕве тăватă кун хушши сўтсе явнă. Комиссире çав сĕнĕве сўтсе явиничен Америка халăхĕн чылай пысăк пайĕ çĕршыва милитаризацилемелли программăна хирĕç тăни, ăна хирĕç активлăн кĕрешме тытăнни курăнать.

Юлашки тăватă кун хушшинче çĕршыври хăшпĕр пысăк организацисен—фермерсен, негрсен, çамрăксен, хĕрарăмсен, тĕн организацийĕсен—паллă деятелĕсемпе официальнай представителĕсем правительство Америка халăхне пурте çар ĕçне вĕренмелли йĕркене йышăнтарма хăтланнине хытă сивленĕ, официальнай органсен представителĕсен суйине—пурне те çар ĕçне вĕрентмелли йĕрке туни «мирпе нациллĕ хăрушсăрлăхăн интересĕсене хўтĕлессинче усăллă ĕç пулса тăрать» тесе суйнине тăрă шыв çине кăларнă. Çак ыйтăва сенат комиссийĕнче сўтсе явиничен пурне те çар ĕçне вĕрентмелли программăн чăн-чăн пĕлтерĕшне лайăхрах ăнланса илме пуçлани, правительствăн ытти çĕршывсене вăрçăпа тапăнмалли программи тĕнчере тата пысăкрах хăрушлăх туса хунă пирки ытларах шиклеме тытăнни курăнать.

Элвин Джонсон сенатор та, халиччен консерватор пулнипе паллă пулса тăнăскер те (демократиллĕ парти членĕ, сената Колорадо штатĕнчен суйланнă), хăйĕн сăмахĕнче асăннă программăна «халăха улталани» пулать тесе хак панă. Вăл çав программа «çынсене США-н çар ведомстви (Пентагон) аллине пани, «çар çыннисене кашни 18 çула çитнĕ çамрăкпа паллă мар вăхăт хушши хăйсене кирлĕ пек усă курма право пани» çинчен каланă.

«Пĕтĕм çĕршыври фермерсен союзĕн», фермерсен «Нейшнл Грейндж» текен консервативлă организацийĕн тата «Америкăн Фарм бюро Федерейшн» текен организацин представителĕсем, комиссире тухса каланă чухне, пурне те çар ĕçне вĕрентмелли программăна хирĕç пулни çинчен пĕлтернĕ, ăна йышăнмалла мар, тесе каланă.

«Нейшнл Грейндж» организаци представителĕ Сандерс: конгресс, халăхăн пысăк пайĕн ирĕкне хирĕçле ĕç туса, пурне те çар ĕçне вĕрентмелли программăна йышăнсан та, ун пирки халăх кăмăлсăр пулĕ, ăна хирĕç хытă тăрĕ, хăçан та пулин ăна пăрахăçлама тивĕ», тесе каланă.

«Америкăри христианла чиркўсен нациллĕ совечĕ»—протестантла чиркўсен советне çĕршыври 29 тĕн организацийĕ кĕрет, çав пĕрлешўсенче 32 миллион çын члента тăрать. Çав советăн официальнай представителĕ Ван Кирк священник пурне те çар ĕçне вĕрентмелли программăна йышăнассине хирĕç тухса каланă.

США-ра пурне те çар ĕçне вĕрентмелли йĕрке тăвассине хирĕç «Баптистсен пĕрлешнĕ конференцийĕн общественноçпа çыхăну тытакан комитечĕн» руководителĕ Доусон та каланă. «Баптистсен кăнтăрти конференцийĕнче» 7 миллион член тăрать, çак конференци пурне те çар ĕçне вĕрентмелли программа демократиллĕ правăсене пĕтерсе хурĕ тата «экономикăри чуралăх» патне илсе пырĕ тесе шутлать, тенĕ вăл. «Христианла çамрăксен пĕрлешĕвĕнче» 10 миллион çамрăк протестант тăрать. Çав пĕрлешĕвĕн председателĕ Шривер пурне те çар ĕçне вĕрентмелли йĕрке тăвассине хирĕç каланă.

Отставкăна тухнă бригаднай генерал Холдридж: «Пентагонри сăтăрçăсем пурне те çар ĕçне вĕрентмелли йĕрке туса хурасшăн, мĕншĕн тесен фашистла пур государствăсенче те çавăн пек йĕрке пулнă, вĕсем те çав принципа йышăнтарасшăн», тенĕ.

Пурне те çар ĕçне вĕрентмелле тăвас ыйтăва сўтсе явнă хыççăн сенатăн хĕçпăшаллă вăйсем енĕпе ĕçлекен комиссийĕ кун пирки йышăнмалли закона мĕн каламалли çинчен сĕнўсем тăратма хатĕрленет.

Пурне те çар ĕçне вĕрентмелли йĕрке тăвассине хирĕç протестлесси çĕршывра анлă саралнă. Çапах та февралĕн 7-мĕшĕнче представительсен палатин хĕçпăшаллă вăйсем енĕпе ĕçлекен комиссийĕ кăçалах пурне те çар ĕçне вĕрентмелли йĕркене пурнăçласа пыма тытăнмашкăн решени йышăннă. Сенат та çавăн пек решени йышăнассине кĕтеççĕ. Анчах ку ыйтăва сенат комиссийĕнче сўтсе явиничен çав решение хирĕç халăхăн анлă массисем малтан кĕтниччен хытăрах хирĕç тăрасси палăрнă.

ИНДОНЕЗИРИ НАЦИЛЛĔ ПАРТИН ИСПОЛНИТЕЛЬНАЙ КОМИТЕЧĔ АМЕРИКĂРАН «ПУЛĂШУ» ИЛЕССИНЕ ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕТ

ДЖАКАРТА, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Антара агентстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 16-мĕшĕнче Индонезири нациллĕ партин исполнительнай комитечĕн ларăвĕ пулнă, унта Америкăран хăрушсăрлăха пĕрле хўтĕлемелли закон текенскер тăрăх «пулăшу» илес ыйтăва сўтсе явнă. Комитет йышăннă резолюцире: ют çĕршывсен ĕçĕсен министрĕ Субарджо алă пуснă килĕшĕве парти тем пулсан та йышăнма пултараймасть, тесе каланă.

Комитет ларăвĕ пулнă хыççăн пичетлесе кăларнă пĕлтерўре çапла каланă: хăрушсăрлăха пĕрле хўтĕлемелли закона сирсе ямалла, тесе шутлать парти. Америкăран «пулăшу» илесси çинчен тунă килĕшĕве алă пуснă пирки пулса тăнă йывăрлăхран тухмалли пĕртен-пĕр тĕрĕс çул вăл правительство хăйĕн пĕтĕм составĕпе отставкăна тухни пулать», тенĕ.

Джакартăри политикăллă ĕçсене сăтакан обозревательсем: «правительство Нациллĕ партин исполнительнай комитечĕн çак решенийĕсенче каланă пек тăвĕ», тесе шутлаççĕ.

Пакистанра ĕççыннисен пурнăçĕ начарланса çитнĕ

КАРАЧИ, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем Пенджаб провинцийĕнче апатçимĕç çителĕксĕр пирки ĕççыннисен пурнăçĕ ытла та начарланса çитни çинчен пĕлтереççĕ.

Пенджаб провинцийĕнчи халăх правительствăран апат-çимĕçпе таварсен хакĕсене тĕрĕслесе тăмалли йĕрке тума ыйтать. «Имроз» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 17-мĕшĕнче Лахор хулинче железнодорожникĕсен пысăк демонстрацийĕ пулнă. Ăна Пакистанри профсоюзсен федерацийĕ ертсе пынипе ирттернĕ. Демонстрантсем хулари пур урамсем тăрăх та çўренĕ. Пенджаб провинцийĕн сывлăха сыхлас ĕç министрĕн çурчĕ умĕнче митинг ирттернĕ. Митингра тухса каланă ораторсем апат-çимĕç магазинĕсем уçма, йўнĕ хакпа тырă сутас ĕçе организацилеме, Пакистанри профсоюзсен федерацийĕн председательне Мирза Ибрагима тĕрмерен кăларма ыйтнă.

Хĕрарăмсен «Мусульман халăхĕн Джинна ячĕпе тăракан лиги» текен организацийĕ митинг пухни, унта пухăннисем правительство умне ĕççыннисен пурнăçне çăмăллатма васкавлă мерăсем йышăнма требовани лартни çинчен пĕлтерет хаçат.

Иракра Англин нефть компанийĕсемпе килĕшў тунине хирĕç протестлеççĕ

БЕЙРУТ, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Ирак Англин нефть компанийĕсемпе нефть кăларса сутас тăрăх пирки килĕшў тунă, çав килĕшĕве Ирак парламенчĕ çирĕплетнĕ. Кун пирки политикăллă ĕçри çынсем кăмăлсăр пулнă. Египетри «Аль Мысри» хаçат çырнă тăрăх, оппозицири партисем—«Халăхăн пĕрлĕхлĕ фрончĕ», «Нации демократиллĕ партийĕ», «Аль Истиклаль» текен парти—хальхи парламент çĕршыври халăхăн ирĕкне палăртса тăмасть тесе шутлаççĕ, хальхи парламента салатса ярасси, çĕнĕ суйлавсем ирттересси çинчен требовани лартма хатĕрленеççĕ.

Малалла «Аль Мысри» хаçат çакна палăртать: парламент членĕсен ытларахăшĕ премьер-министр Нури Саид-паша майлă тăрать, çавăнпа та Ирак парламенчĕ нефть пирки тунă килĕшĕве çирĕплетнĕ. Анчах политикăллă ĕçри çынсем: çĕнĕ суйлавсене ирттерсен, Нури Саид-паша майлă тăракансем çĕнĕ парламентра сахалтарах пулĕç, парламент членĕсен тăваттăмĕш пайĕ кăна Нури Саид-паша майлă пулĕ, çĕнĕ парламент нефть килĕшĕвне сирсе ярĕ, тесе шутлаççĕ.

Паян Бейрутри радио çакăн çинчен пĕлтернĕ: нефть пирки тунă килĕшĕве Ирак сеначĕ çирĕплетнĕ хыççăн оппозицири партисен лидерĕсем февралĕн 17-мĕшĕнче халăха чĕнсе калани çырса кăларма, халăха çав килĕшĕве çирĕплетнине хирĕç протестленĕ ятпа февралĕн 19-мĕшĕнче пĕтĕмĕшле забастовка пуçарма чĕнмешкĕн йышăннă.

Карачи хулинчи пир-авăр тĕртекенсен забастовки

КАРАЧИ, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Имроз» хаçат Карачи хулинчи «Валика» текен пир-авăр фабрикинче предприяти хуçисемпе рабочисем хушшинче хирĕçў тухни çинчен пĕлтерет. Çак хирĕçў малалла пырать. Пир-авăр промышленноçĕнчи рабочисен федерацинче тăракан рабочисен пысăк пайĕ халĕ те фабрикăра ĕçлеме тытăнман. Федераци представителĕ «Имроз» хаçатăн корреспонденчĕ «полици рабочисене ирĕксĕрлесех ĕçлеттерессишĕн, çĕнĕрен ĕçлеме тытăнма хушать», тесе каланă.

Рабочисем çав хирĕçĕве правительствăна хутшăнма тата пир-авăр промышленноçĕнчи рабочисен федерацийĕн арестленĕ руководителĕсене ирĕке кăларма ыйтаççĕ.

ФИНЛЯНДИРЕ МИРШĔН ТĂРАКАНСЕН ВИÇÇĔМĔШ КОНГРЕСНЕ ИРТТЕРМЕ ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

ХЕЛЬСИНКИ, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндире миршĕн тăракансен виççĕмĕш конгресне мартăн 29-мĕшĕпе 30-мĕшĕнче Хельсинки хулинче ирттерме йышăннă. Конгресра çурçĕрти çĕршывсенче мирлĕ пурнăçа сыхласа хăварассишĕн кĕрешес ĕçри ыйтусем тата мире тĕреклетессишĕн кĕрешес ĕçре Финлянди умĕнче тăракан задачăсем çинчен сўтсе яваççĕ.

Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсем лайăх иртнĕ

ЧКАЛОВСКИ. Иртнĕ вырсарникун район центрĕнче йĕлтĕрçĕсен массăллă ăмăртăвĕ пулса иртрĕ. Унта учрежденисемпе предприятисенчен, колхозсемпе шкулсенчен пурĕ 19 команда—159 çын хутшăнчĕ.

Вунă километра хăвăрт чупса тухмалли ăмăртăва 44 спортсмен хутшăнчĕç. Пурте вĕсем тĕреклĕ, çирĕп сывлăхлă çамрăксем. Кĕрешў питĕ вăйлă пулчĕ. Йĕлтĕрçĕсем пĕринчен-пĕри юлмасăр хăвăрт чупрĕç. Акă финиш. Унта пуринчен малтан Г. Антонов юлташ чупса çитсе пĕрремĕш вырăна тухать. Унăн вăхăчĕ 40 минут та 25 секунд. Патăръелĕнчи педагогика училищинче вĕренекен В. Ахмеев студент унтан 2 секунда кăна каярах юлса çитет. Г. Антоновпа В. Ахмеев иккĕшĕ те пĕрремĕш разрядри спортсменсем.

Çак дистанцире Еншикри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учитель А. Миронов юлташ виççĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

Ăмăртура уйрăмах хĕрачасем лайăх тĕслĕх кăтартрĕç. 8 километра ăмăртса чупса, пĕрремĕш разрядри спортсменка, спорт ăмăртăвĕсенче район чысĕшĕн сахал мар кĕрешнĕ Лидия Абакумова мала тухрĕ. Çак дистанцие вăл 36 минут та 22 секундра чупса тухрĕ. Патăръелĕнчи педагогика училищинче вĕренекен çамрăк спортсменка Олимпиада Мальцева, Турн Туçари вăтам шкулти учительница Вера Стеклова çав дистанцие хăвăрт чупса тухрĕç. Вĕсен вăхăчĕ пĕрремĕш разрядри спорт квалификацийĕн норминчен те лайăхрах. Ăмăртăва хутшăннă ытти хĕрачасем пурте II-мĕш тата III-мĕш разрядсенчи спортсменсен нормисене пачĕç.

Пилĕк километра 26 хĕрача ăмăртса чупрĕ. Çак ăмăртура педагогика училищинчи студентка В. Атнашкина питĕ лайăх тĕслĕх кăтартрĕ, вăл 5 километра 23 минут та 33 секундра чупса тухса малти вырăна йышăнчĕ, пĕрремĕш разрядри спортсмен нормине тултарчĕ. Иккĕмĕш вырăнта — вăтам шкулта вĕренекен Г. Зайкова.

Арçынсем хушшинче 18 километра хăвăрт чупса тухассишĕн вăйлă кĕрешў пулчĕ. Сехет ытларах пынă кĕрешўре пĕрремĕш разрядри спортсмен В. Кузнецов мала тухрĕ, унăн вăхăчĕ 1 сехет те 13 минут та 23 секунд.

Йĕлтĕрçĕсен Пĕтĕм Союзри кросне хутшăнса ирттернĕ ăмăртусем районта йĕлтĕр спортне анлăн сарма, лайăх спортсменсене палăртма пулăшрĕç. Иртнĕ кунхи ăмăртура 7 çын—пĕрремĕш разрядри, 22 çын—иккĕмĕш разрядри тата 37 çын—виççĕмĕш разрядри спортсмен нормисене панă.

* * *

ÇĔРПУ, февралĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Енер районта йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ пулчĕ. Унта 23 команда, пурĕ 135 çын хутшăнчĕ.

Йĕлтĕрçĕсем 3, 5, 10, 18 километра ăмăртса чупрĕç.

18 километра педучилищĕре вĕренекен В. Дрезин чи малтан чупса тухрĕ. Унăн вăхăчĕ—1 сехет те 20 минут та 45 секунд. Вăрнарсинчи вăтам шкулта вĕренекен В. Андреев иккĕмĕш вырăна тухрĕ.

10 километр ăмăртса чупса, Çĕрпўри вăтам шкулта вĕренекен Юрий Плотников пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

Ăмăртура педагогика училищин командн пĕрремĕш вырăн, Çĕрпўри вăтам шкул команди иккĕмĕш вырăн йышăнчĕç.

Предприятисем енĕпе пĕрремĕш вырăна «Перламутр» артельри йĕлтĕрçĕсем тухрĕç.

Ăмăртăва хутшăннисенчен 3 çын иккĕмĕш разряд, 37 çын виççĕмĕш разряд, 19 çын çамрăксен разряд нормисене, ыттисем ГТО значокĕн нормисене тултарчĕç.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, февралĕн 20-мĕшĕнче, чăвашла спектакль

«ЭНТИП»

Ыран, февралĕн 21-мĕшĕнче, вырăсла спектакль

«МОЛОДОЙ ЧЕЛОВЕК»

Эрнекун, февралĕн 22-мĕшĕнче, чăвашла спектакль

„Кашни кашăках аш тумалĕ лекмест“

Спектакльсем каçхине 20 сехетре пуçланаççĕ.

ШУПАШКАРТИ ТАТА РЕСПУБЛИКĂРИ КИНОТЕАТРСЕНЧЕ

Китайра ўкернĕ

„Сын степей“

(Победа народа внутренней Монголии)

ятлă çĕнĕ илемлĕ фильм кăтартма пуçлаççĕ.

Сценари авторĕ—Ван Чжень-Чжи.

Композиторсем — Сюй Гуй-цай, Ли Си.

Дирижерсем — И Жэнь-шань, Ли Бин-Шэнь.

Фильма Китай Халăх Республикинчи Дунбейри киностуди ўкернĕ.

Экрансем çине «Главкинопрокатăн» Чăваш республикинчи кантурĕ кăларать.

1952 çул.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—8-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00329 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.